24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ДЕКАБРЬ 9 ЫТЛАРИКУН 290 (6005) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

Тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме вĕренер

Пирĕн танк промышленноçĕ начар ĕçлет теме, фронта танксем сахал парать теме çук. Советăн йывăр танкĕсем нимĕçсене питĕ хăратаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Хĕвелтухăç фронтĕнче нимĕçсен командованийĕ: вырăссен пĕр йывăр танкне пĕтерекене тимĕр хĕрес орденĕ пулать, тесе пĕлтерет. Çавăн пек йывăр танксене çĕрĕн-кунĕн ĕçлесе ытларах та ытларах туса кăларасси—танксем тăвакан заводсен çеç мар, вăл пĕтĕм çĕршывăн, мĕнпур халăхăн задачи пулса тăрать.

Юлашки вăхăтра çĕршыва танксем тума пулăшас ĕçĕ комсомолецсемпе çамрăксем те активлăн хутшăнаççĕ. Комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем пуçарнипе пур çĕрте те тенĕ пекех танксем тума укçа-тенкĕ пухас ĕç анлăн сарăлчĕ.

Пирĕн Чăваш республикинче те Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксем пуçарнипе ĕççыннисем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухаççĕ. Республикипе темиçе çĕр пин тенкĕ пухăннă та ĕнтĕ. Укçа пухас ĕç вăйлансах пырать.

Унсăр пуçне, комсомолецсемпе çамрăксем ноябрĕн 23-мĕшĕнче виççĕмĕш воскресник туса ирттерчĕç. Воскресникре, çамрăксемпе пĕрле, ваттисемпе шкулта вĕренекен ачасем те тухнă. Вĕсем темиçе пин тенкĕлĕх ĕçленĕ. Çав кун ĕçлесе илнĕ тупăша танксен çĕнĕ колоннисене тунă çĕре хывнă.

Анчах заводсенчен туса кăларнă çĕнĕ танксем тăшмана хирĕç хăйсемех кĕрешме пултараймаççĕ. Çавăнпа та кашни çамрăкăн, пулас боецăн танксемпе çăмăрне, тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме пĕлмелле.

Çак ĕçе халĕ ĕнтĕ пирĕн Чăваш республикинче те темиçе çĕр çын, хăюллă та шиксĕр çамрăксем, хĕрсех вĕренеççĕ. Занятисем вăрçă вăхăтĕнчи евĕрлĕ условисенче, иртен пуçласа сĕм тĕттĕм пуличченех пыраççĕ. Боецсем тăшман танкĕ çине тĕл пеме вĕренме ятарласа танк макечĕсем туса хатĕрленĕ. Çавăн пек практикăллă занятисем пулас боецсене фронтри пурнăçпа паллаштараççĕ. Çамрăк патриотсен тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме вĕренес кăмăлĕ пысăк. Занятисенче хăйсене йĕркеллĕ тытнине, материала лайăх ăнланса юлма тăрăшнине кăтартаççĕ вĕсем.

Елчĕк районĕнче тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме вĕренекен боецсем 110 сехетлĕ программăна вĕренсе пĕтерчĕç. Вĕренсе тухнисенчен 75 проценчĕ «отлично» палла илнĕ. Тепĕр кунне вĕсенчен нумайĕшĕ военкомата хăйсене Хĕрлĕ Çара яма ыйтса заявлени панă. Теллин комсомолец хăйĕн заявленийĕнче çапла çырать: «Фашистла çĕлен-калтасем пире хăйсен тарçисем тăвасшăн. Çук, вăл тата ытти отличник-комсомолецсем те панă. Куславкка, Пăрачкав тата ытти районсенче комсомолецсемпе çамрăксем тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешмелли искусствăпа паллаштарас задача лартмалла. Сталин юлташ: «Тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешмелли шăтăксем тата тĕрлĕ йышши чăрмавсем ытларах тумалла», тесе чĕнни çине хастарлă ĕçпе ответлемелле. Комсомолецсен ку ĕçпе ытти ĕççыннисене пример кăтартса пымалла.

Тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме кашни çамрăк пĕлсе тăтăр!

Кучухнехи вăрçăра кашни пăшал тытма пултаракан çынăн, кашни çамрăкăн тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме вĕренмелле. Ятарласа организацине отрядсенче вĕрентсе кăларнипе лăпланса ларма юрамасть. Комсомол организацийĕсен кашни комсомолецех, çамрăках тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешмелли искусствăпа паллаштарас задача лартмалла. Сталин юлташ: «Тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешмелли шăтăксем тата тĕрлĕ йышши чăрмавсем ытларах тумалла», тесе чĕнни çине хастарлă ĕçпе ответлемелле. Комсомолецсен ку ĕçпе ытти ĕççыннисене пример кăтартса пымалла.

Тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме кашни çамрăк пĕлсе тăтăр!

Кучухнехи вăрçăра кашни пăшал тытма пултаракан çынăн, кашни çамрăкăн тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме вĕренмелле. Ятарласа организацине отрядсенче вĕрентсе кăларнипе лăпланса ларма юрамасть. Комсомол организацийĕсен кашни комсомолецех, çамрăках тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешмелли искусствăпа паллаштарас задача лартмалла. Сталин юлташ: «Тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешмелли шăтăксем тата тĕрлĕ йышши чăрмавсем ытларах тумалла», тесе чĕнни çине хастарлă ĕçпе ответлемелле. Комсомолецсен ку ĕçпе ытти ĕççыннисене пример кăтартса пымалла.

Тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме кашни çамрăк пĕлсе тăтăр!

Кучухнехи вăрçăра танксемпе моторсен вăрçи пулса тăрать. Танксемсĕр тата сывлăшран авиаци çителĕклĕ тарăн хуçĕленисĕр кĕрешме пехотăна питĕ йывăр. Пахалăх тĕлĕшпе пирĕн авиаци тата танксем нимĕçсеннинчен малтан тăраççĕ. Пирĕн летчиксемпе танкистсем те паттăрлăн кĕрешеççĕ. Анчах пирĕн самолетсем, танксем нимĕçсеннинчен сахалрах-ха. Çавăнпа нимĕç çарĕ вăхăтлăха çитĕнÿсем турĕ. Нимĕçсем танксем нумай туса кăлараççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хальхи вăхăтра хăйсен танк промышленноçне çеç мар, тата Чехословаки, Бельги, Голланди, Франци промышленноçне те хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

Нимĕç захватчикĕсем ССР Союзĕнчи халăхсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкмалли вăрçă туянасшăн. Ăна вĕсем туннĕç. «Пирĕн тăван çĕршыв территорийĕ çине ăна оккупацилекенсем пулса сĕмсĕрленсе кĕнĕ нимĕçсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, пĕтерсе тăкмалла», терĕ Сталин юлташ.

Çак задачăна пурнăçа кĕртес пулсан, «пирĕн рабочисемпе служащисем, арçынсемпе хĕрарăмсем, предприятисенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронта валли танксем, танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн колхозниксем, арçынсемпе хĕрарăмсем, хăйсен уйхирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронтра çĕршыв валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар, ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн пĕтĕм çĕршыв тата ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсем организацилесе пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ, пирĕн çарпа тата флотпа пĕрле хамăр тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, нимĕç çарĕсене çапса çĕмĕрессишĕн ирĕклĕхлĕ аслă вăрçă туса пыракан лагерь пулса тăни кирлĕ», тет Сталин юлташ.

Çамрăк истребительсен отрячĕ

ЕЛЧĔК. Сталин юлташ чĕнĕвне ответлесе, районри военкоматпа ВЛКСМ райкомĕ тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме вĕрентес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксенчен ятарласа группăсем организацилерĕç. Çав группăсем хăй хăйсен ĕçне вĕçлерĕç. Вунпаян çамрăк тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме вĕренсе тухрĕç. Вĕренсе тухнисенчен 75 проценчĕ «отлично» палла илчĕç. Тепĕр кунне вĕсенчен нумайĕшĕ военкомата хăйсене Хĕрлĕ Çара яма ыйтса заявлени панă. Теллин комсомолец хăйĕн заявленийĕнче çапла çырать: «Фашистла çĕлен-калтасем пире хăйсен тарçисем тăвасшăн. Çук, вăл тата ытти отличник-комсомолецсем те панă. Куславкка, Пăрачкав тата ытти районсенче комсомолецсемпе çамрăксем тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешмелли искусствăпа паллаштарас задача лартмалла. Сталин юлташ: «Тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешмелли шăтăксем тата тĕрлĕ йышши чăрмавсем ытларах тумалла», тесе чĕнни çине хастарлă ĕçпе ответлемелле. Комсомолецсен ку ĕçпе ытти ĕççыннисене пример кăтартса пымалла.

Тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме кашни çамрăк пĕлсе тăтăр!

Кучухнехи вăрçăра танксемпе моторсен вăрçи пулса тăрать. Танксемсĕр тата сывлăшран авиаци çителĕклĕ тарăн хуçĕленисĕр кĕрешме пехотăна питĕ йывăр. Пахалăх тĕлĕшпе пирĕн авиаци тата танксем нимĕçсеннинчен малтан тăраççĕ. Пирĕн летчиксемпе танкистсем те паттăрлăн кĕрешеççĕ. Анчах пирĕн самолетсем, танксем нимĕçсеннинчен сахалрах-ха. Çавăнпа нимĕç çарĕ вăхăтлăха çитĕнÿсем турĕ. Нимĕçсем танксем нумай туса кăлараççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хальхи вăхăтра хăйсен танк промышленноçне çеç мар, тата Чехословаки, Бельги, Голланди, Франци промышленноçне те хăйсен аллинче тытса тăраççĕ.

Нимĕç захватчикĕсем ССР Союзĕнчи халăхсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкмалли вăрçă туянасшăн. Ăна вĕсем туннĕç. «Пирĕн тăван çĕршыв территорийĕ çине ăна оккупацилекенсем пулса сĕмсĕрленсе кĕнĕ нимĕçсене пурне те, пĕр çын юлмиччен, пĕтерсе тăкмалла», терĕ Сталин юлташ.

Çак задачăна пурнăçа кĕртес пулсан, «пирĕн рабочисемпе служащисем, арçынсемпе хĕрарăмсем, предприятисенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронта валли танксем, танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе орудисем, самолетсем, тупăсем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн колхозниксем, арçынсемпе хĕрарăмсем, хăйсен уйхирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени тата вĕсем фронтра çĕршыв валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чĕртавар, ытларах та ытларах парса пыни кирлĕ; пирĕн пĕтĕм çĕршыв тата ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсем организацилесе пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ, пирĕн çарпа тата флотпа пĕрле хамăр тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, нимĕç çарĕсене çапса çĕмĕрессишĕн ирĕклĕхлĕ аслă вăрçă туса пыракан лагерь пулса тăни кирлĕ», тет Сталин юлташ.

ВКП(б) Мускав хула комитечĕн пленумĕ

Декабрĕн 6-мĕшĕнче ВКП(б) Мускав хула комитечĕн пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум Сталин юлташ 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă хăйĕн докладĕнче тата Хĕрлĕ площадьре 1941 çулти ноябрĕн 7-мĕшĕнче каланă сăмахĕнче кăтартса панисене пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен ВКП(б) Мускав комитечĕпе Мускав хула комитет секретарĕн Щербаков юлташăн докладне итленĕ. ВКП(б) Мускав хула комитечĕн пленумĕ хĕçпăлалла боеприпассем туса кăларас плана тулторса пырас тĕлĕшпе, Мускава хÿтĕлекен Хĕрлĕ Çара парти организацийĕсем енчен парса тăракан пулăшăва вăйлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мероприятисем палăртса хăварнă.

Пленум парти организацисене партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатма, сутуилÿ организацийĕсен тата Мускав хулинчи халăхăн кулленхи пурнăçĕшĕн ĕçлекен организацисен ĕçĕсене куллен ертсе пыма хушнă. ВКП(б) Мускав хула комитечĕн пленумĕ партире тăракан тата партире тăман большевиксене пурне те Мускав оборонишĕн тата пĕтĕм çĕршыва немĕçсен фашистла захватчикĕсенчен хÿтĕлес тĕлĕшпе татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕннĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 6-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 6-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

Декабрĕн 5-мĕшĕнче нимĕçсен 14 самолетне персе антарнă. Пирĕн 4 самолет пĕтнĕ.

Декабрĕн 6-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 3 самолетне персе антарнă.

* * *

Пирĕн авиаци декабрĕн 5-мĕшĕнче нимĕçсен 70 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 330 ытла автомашинине, 7 полевой орудине, горючи тултарнă 9 автоцистернине, боеприпассем тиенĕ лавĕсене 200 ытла пĕтерсе тăкнă, тăшман пехотин 2 полкне тата 300 юланутçине вĕлерсе пĕтернĕ тата сапаласа янă.

* * *

Фронтăн Калинин енчи участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Юшкевич юлташăн чăсĕсем хаяр çапăçусенче халăх пурăнакан чылай пунктсенчен нимĕçсене хăваласа кăларнă тата çав çапăçусем вăхăтĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 350 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăнне 6 оруди, темиçе пулемет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан Захаркин юлташăн чăсĕсенчи артиллеристсем декабрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсенне миномет сен 8 батарейине, артиллерин пĕр батарейине, пулеметсен 3 точкине пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр ротăна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Лопатин юлташăн боецĕсем Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче икĕ кун хушши пынă çапăçусенче нимĕçсен 19 танкне, 16 автомашинине пĕтерсе тăкнă, 17 оруди, боеприпассемпе ытти вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ 54 автомашинăна, 3 трактор, 7 миномет, 8 пулемет, снарядсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç захватчикĕсем хĕллехи сивĕсенчен хăтăлса юлма бараксемпе землянкăсем тăваççĕ. Фронтăн Калинин енĕнче тăшманăн тылĕнче çапăçакан партизансен отрячĕсем нимĕçсене сивĕрен пытанма тунă вырăнсенчен хăвала-хăвала кăлараççĕ. Фронтран инçе мар çĕрте фашистсем поселок тунă пулнă. И. Юлташ отрядĕнчи боецсем ноябрĕн 27-мĕшĕнче çĕрле çав поселока хупăрласа илсе тивертсе янă. Вут тивсе илнĕ бараксем ăшĕнчен тарса тухакан нимĕçсене партизансем тĕл персе вĕлерсе тăкнă. Мухтавлă партизансем пĕр сехет хушшинче нимĕçсен 38 салтакне персе вĕлернĕ.

Декабрĕн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче икĕ кун хушшинчи çапăçусенче Говоров юлташăн боецĕсем нимĕçсен 11 танкне, 13 орудине, 14 миномет не, 27 пулеметне тытса илнĕ тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1500 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Пирĕн Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен летчиксем 12 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 82 самолетне персе ÿкернĕ, тăшманăн 147 танкне, 86 орудине, 23 миномете, 24 зенитнăй установкине, пехотăпа çар хатĕрĕсем турттаракан 2600 ытла автомашинине пĕтерсе тăкнă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 8.000 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ростов облаçĕнчи ялсенче, нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнăскерсенче, пурăнакан çынсем вĕсене гитлеровецсем этемле мар асаплантарни тата хĕн кăтартни çинчен каласа параççĕ. Фашистсем пурне те пĕтĕмпех çаратса пĕтернĕ, нумайĕшне чăлахлатса хăварнă, вĕлернĕ. «Пирĕн Родионово-Несветаевка ялне нимĕçсем ноябрĕн пуçламĕшĕнче тытса илчĕç,—тесе каласа парать колхозник Михаил Григорьевич Федоренко.—Ман пата пÿрте фашистсен 10 салтакĕ çĕмĕрсе кĕчĕ те хăйсем ман патра пурăнасси çинчен пĕлтерчĕç. Вĕсем ман пурăхпа мĕн тăвас тенĕ, çавна тăватчĕç, хăйсене мĕн килĕшнине пурне те илетчĕç. Мана шкафпа çырана питĕрме чарчĕç. Нимĕçсем манăнне çăнăх, аш-какай, чăхсене, атă, алшăсемпе чăлхасем тата ытти яланасем те илсе хайрĕç». Астахово ялĕнче нимĕçсем 12 кун пурăннă. Çак вăхăт хушшинче вĕсем хрестьенсене пурне те çаратса пĕтернĕ. Леонид Осипов колхозникăнне фашистсем мĕнпур яланасене, çивиттине тата минтерсене илсе тухса кайнă. Антип Стальновăнне мĕнпур тумтирсемпе атă-пушмаксене илсе тухса кайнă. Маяки ялĕнче фашистла вăрă-хурахсем урампа иртсе пыракансене тыта-тыта чарнă та, вĕсенне кĕрĕк пиншакĕсене, пальтосене тата стăсене хыва-хыва илнĕ. Вĕсем урампа Михаил Земляной ăн, Мария Кириченкон тата ытти сен тумтирĕсене хывса илнĕ. Нижне-Крепинское ялĕнче нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем Трофим Гончаров шахтера тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче тытăкăна илнĕ нимĕçсем кăтартса панă тăрăх, Германи салтакĕсем хушшинче фашистсене хирĕçле тата вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем малалла ÿссе пыраççĕ. 76-мĕш пехотнăй дивизи 230-мĕш полкĕнчи тытăкăна лекнĕ ефрейтор Иосиф Руприт çапла калать: Гитлер пуçланă çак вăрă-хурахла вăрçă мана тарăхтарать. Эпĕ майлă вăхăта кĕтсе илтĕм те хамăн пулеметпа пĕрлех тытăкăна парăнтăм. Ротăра шухăш-кăмăлсем питĕ начар. Вăрçа салтаксене çавтери йăлăхтарса çитерчĕ. Вĕсем мĕнле те пулин хăвăртрах киле каясшăн. Нумаях пулмасть пирĕн ротăран стрелок Люкфельд тарчĕ. Салтаксем нимĕç хаçачĕсенче çырнисене ĕненмеççĕ, унта пĕтĕмпех суя çыхпарсем çеç, теççĕ». Нимĕçсен 16-мĕш танковăй дивизийĕн 64-мĕш полкĕнчи тытăкăна лекнĕ обер-ефрейтор Вильгельм Буш çапла каласа парать: «Уйăх çурă ĕнтĕ эпир çăвăнмастпăр. Шурă кĕпе-йĕм пирĕн çук, пурте пыйтланса кайрĕç. Уйрăмăнах халĕ сивĕ пире хĕн кăтартать. Шинелсем питĕ çухе, вĕсем те пулин çĕтĕлсе пĕтрĕç. Юлашки вăхăтра апат-çимĕç вăйлăн начарланчĕ. Çу тавраш ĕ пачах памаççĕ. Юлашки 14 кун хушшинче пирĕн рота вĕри апат пĕрре те илмен. Сурансене çыхмалли материалсем çук. Фронтри салтаксен шухăш-кăмăлĕсем начар. Анчах çапах та вĕсем шикленсе калаçаççĕ, мĕншĕн тесен çывăхра наци ст пулма пултарать, çавăнпа та асăрханмасăр каланă кашни сăмахшăнах войскăсене пăсса пынă тесе айăплама тата вĕлерме пултараççĕ».

* * *

Конница хулин районĕнче Греци партизанĕсем Итали стрелокĕсем çине таптаннă. Хире-хирĕç персе тăнă вăхăтра Италин 12 салтакне тата 2 офицерне пĕтерсе тăкнă. Партизансем 8 винтовка, 2 автомат тата станковăй пулемет тытса илнĕ. Керкира портĕнче партизансем Италин пысăк мар пароходне тытса илнĕ, командăна вĕлерсе пĕтернĕ те пароходне шыва путарнă. Греци патриочĕсемпе Итали салтакĕсем хушшинче Флорина хули патĕнче пысăк тытăçу пулса иртнĕ. Итали салтакĕсен колонни çине пулеметсенчен персе ăна пысăк çухатусем кÿнĕ.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

Авиацин Хĕрлĕ ялавлă тата Ленин орденлĕ 29-мĕш полкĕн тата авиацин 526-мĕш, 155-мĕш, 31-мĕш, 129-мĕш, 215-мĕш полкĕсен ячĕсене улăштарса вĕсене гвардейски полксен ятне парасси çинчен

Фашистла захватчиксене хирĕç пирĕн тăван совет çĕршывĕмĕн пынă нумай хутченхи сывлăшри çапăçусенче авиацин Хĕрлĕ ялавлă тата Ленин орденлĕ 29-мĕш полкĕ, авиацин 526-мĕш, 155-мĕш, 31-мĕш, 129-мĕш, 215-мĕш полкĕсем хăйсен паттăрлăхне уйрăмăнах кăтартса панă.

Авиацин Хĕрлĕ ялавлă тата Ленин орденлĕ 29-мĕш истребительнăй полкĕ икĕ уйăх çурă хушши çапăçса сывлăшри çапăçусенче противникăн 47 самолетне персе антарнă, 12 мотомех-колоннине, артиллерин 4 колоннине, кавалерин икĕ колоннине сапаласа янă, вĕлерсе пĕтернĕ тата горючин темиçе склачĕпе цистернине пĕтерсе тăкнă.

Авиацин 526-мĕш истребительнăй полкĕ уйăх çурă хушшинчи çапăçусенче противникăн Красная Вишерка ялĕнчи войскисене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă,—нимĕçсен çакăнти войскисем пире хирĕç тăракан пысăк вăйсем пулнă,—сывлăшри çапăçусенче противникăн 16 самолетне персе антарнă. Вĕçсе пырса штурмласа противникăн пехотине 2.000 çынна яхăн, нимĕçсен 348 автомашинине, 6 танкне, 13 орудине, пулеметсен 39 точкине, миномет сен 7 батарейине, боеприпассен 2 складне пĕтерсе тăкнă.

Авиацин 155-мĕш истребительнăй полкĕ çанталăкăн йывăр условийĕсенчех, противникăн вăйĕсем пирĕннинчен икĕ е виçĕ хут ытларах пысăк пулнине пăхмасăрах, противникăн 207 самолетне персе антарнă тата 4 самолета çунтарса янă, вĕçсе пырса штурмласа противникăн пехотăпа грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине ытла, тăшман пехотине 400 çынна яхăн, артиллерин 5 батарейине, 10 зенитнăй точкăна пĕтерсе тăкнă. Пирĕн бомбăсем пăрахакан тата разведка тăвакан авиацине полк яланах ăнăçлăн пулăшса пынă, хамăран авиацине лайăх хÿтĕлеинне пула пирĕн пĕр самолета та персе антарма паман.

Авиацин пикировка тăвакан 31-мĕш бомбардировочнăй полкĕ фашистсен пуçĕсем çине 9.000 бомба ытла пăрахнă. Полк паттăрăн çапăçса противникăн тинĕсри пĕр транспортне путарнă, икĕ транспорта сиенленĕ, тăшманăн 260 танкне çити, 9 бронемашинине, 350 автомашинине ытла, горючи тултарнă 34 автоцистернине, артиллерин 14 батарейине, 10 зенитнăй точкине, 4 чугунçул эшелонне, горючи усракан пĕр склада тата тăшманăн пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Полк сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 19 самолетне персе антарнă тата противникăн 4 самолетне çĕр çинче пĕтерсе тăкнă.

Авиацин 129-мĕш истребительнăй полкĕ Ярцево енче противникăн танковăй дивизийĕсене çапса аркатас ĕçе тата противникăн Великие Луки енчи наступленине чарса ларатас ĕçе хутшăннă. Сывлăшри çапăçусенче полк противникăн 82 самолетне пĕтерсе тăкнă, штурмласа тапăнса тăшманăнне 120 автомашина, 1000 фашиста çити пĕтерсе тăкнă, зенитнăй артиллерин 12 батарейине пусарса лартнă.

Авиацин 215-мĕш штурмовой полкĕ уйăх çурă хушшинчи çапăçусенче противникăн 68 самолетне, 183 танкне, 474 автомашинине бензин цистернисене, артиллерин 120 орудине çити тата 3.500 фашиста пĕтерсе тăкнă.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пулнă сывлăшри çапăçусенче авиацин çÿлте асăннă полкĕсен личнăй составĕ хăюлăхпа паттăрлăх тата çирĕплĕхпе геройлăх кăтартнăшăн Верховнăй Главнокомандованин ставки авиацин çак асăннă полкĕсен ячĕсене улăштарса çакăн пек ятсем памалла тунă:

а) Авиацин Хĕрлĕ ялавлă тата Ленин орденлĕ 29-мĕш истребительнăй полкне—**Авиацин Хĕрлĕ ялавлă тата Ленин орденлĕ 1-мĕш гвардейски истребительнăй полкĕ** (полк командирĕ майор **А. П. Юдаков**);

б) Авиацин 526-мĕш истребительнăй полкне—**Авиацин 2-мĕш гвардейски истребительнăй полкĕ** (полк командирĕ майор **П. М. Метелкин**);

в) Авиацин 155-мĕш истребительнăй полкне — **Авиацин виççĕмĕш гвардейски истребительнăй полкĕ** (полк командирĕ майор **Д. С. Шпак**);

г) Авиацин пикировка тăвакан 31-мĕш бомбардировочнăй полкне —**Авиацин пикировка тăвакан тăваттăмĕш гвардейски бомбардировочнăй полкĕ** (полк командирĕ подполковник **П. И. Добыш**);

д) Авиацин 129-мĕш истребительнăй полкне—**Авиацин 5-мĕш гвардейски истребительнăй полкĕ** (полк командирĕ майор **Ю. М. Беркаль**);

е) Авиацин 215-мĕш штурмовой полкне—**Авиацин 6-мĕш гвардейски штурмовой полкĕ** (полк командирĕ подполковник **Л. Д. Рейно**).

Çакăнта кăтартнă полксене гвардия ялавĕсене парасçĕ.

Авиацин кашни гвардейски полкне самолетсен пĕрер эскадрильине хушса параççĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă тумтирсем

ЕЛЧĔК. Районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 15 мăшăр çаматă, 1.421 килограмм çăм, 2510 тир, 368 çĕлĕк, 508 мăшăр носки, 676 мăшăр алшиш, 209 мăшăр пир тăла, 57 ваткăллă шалавар тата ытти япаласем нумай пачĕç. Çав япаласене нумайĕшне ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне янă.

Пухнă çăмран вырăнтах çаматă йăвалаççĕ, тирсене туса кĕрĕк пиншаксем çĕлеççĕ. Нумаях пулмасть 377 мăшăр çаматă, 96 кĕрĕк пиншак çĕлесе пĕтернĕ.

Ăшă тумтирсем хатĕрлес ĕç Ленин, Крупская ячĕсемпе тăракан колхозсенче, «Марс», «Комбайн» колхозсенче ăнăçлăн пырать. Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кĕске вăхăтра 22 килограмм çăм, 12 кĕрĕк пиншак, 15 мăшăр çаматă, 30 мăшăр алсасемпе чăлхасем, 9 çĕлĕк тата ытти вак япаласем панă.

Çак кунсенче районри учительсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 96 тир, 27 килограмм çăм, 5 мăшăр çаматă, 30 алшăлли панă.

В. ИВАНОВ.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатра ĕçлекен рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем çĕршывăн йывăр та хаяр кунсем килсе тухнă вăхăтра пĕтĕм ĕçе фронт интересĕсене шăхăнтарса туса пыраççĕ.

Стахановла ĕç куллен сарăлса пырать. Кашни рабочи производствăра çитĕнÿсем тунисĕр пуçне, Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсене ăшă тумтир тата укçа-тенкĕ парса пулăшма тăрăшать. Оборона фондне рабочисем 66.700 тенкĕ укçа тата нумай пин тенкĕлĕх облигацисем хывнăç. Рабочисемпе работницăсем малалла та, нимĕç оккупанчĕсене пĕр çын юлми вĕлерсе пĕтериччен, оборона фондне уйăхсерен пĕр кунлăх ĕç уçси парса тăма йышăнчĕç. Халĕ çакна кашни рабочи пурнăçлама пырать.

Хĕрлĕ Çар воинĕсене валли ăшă тумтирсем хатĕрлес ĕçе, коммунистсемпе комсомолецсемсĕр пуçне, профсоюз активне те анлăн явăçтарнă. Ку тапранчĕн пурĕ 1.650 ăшă япала панă. Массăллă-ăнлантарууллă ĕç куллен пулса пырать. Халĕ «Комсомолец Чувашии» бронепоезда тума укçа пухма тытăннă.

Ф. ГУСЬКОВ.
Древкомбинатри завком председателĕ.

* * *

ЭЛĔК. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Тăван çĕршыва паттăрăн сыхлакан Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлесе парас ĕç районта кĕрÿллĕпырать. Ноябрĕн çур уйăхĕ тĕлне районĕпе 1.410 тир, 1.150 килограмм çăм, 310 мăшăр алшăсемпе перчаткăсем, 154 мулаххай, 610 алшăлли, 230 мăшăр çăм чăлха, 64 мăшăр çаматă, 70 фуфайка, 67 ваткăллă шалавар тата ăшă çĕпесем, шлемсем, простыньсем чылай пухнă.

Районĕпе пухнă тирсенчен, çăмсенчен вырăнтах ăшă тумтирсем хатĕрлеççĕ. Матьăкри «Большевик» тата Охверкăри «Самолет» промартельсем 1000 тир туса панă. Çав тунă тирсенчен Кĕçĕн Тукташри «Молния», Çĕмĕрткассинчи «Ударник» промартельсем 120 кĕрĕк пиншак çĕленĕ, Синерти «Коммунар» промартель 70 фуфайка, 105 шалавар, 4 кĕрĕк пиншак çĕлесе панă.

Районта малта пыракан Хуравартри «Заветы Ильича» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 41 чĕр тир, 2 мăшăр çаматă, 26 мăшăр алшиш, 21 мăшăр носки, 10 килограмм çăм, 15 метр пир пухнă. Иштеркри «15 лет Октября» колхоз 2 мăшăр çаматă, 11 килограмм çăм, 100 тир т. ыт. япаласем те панă.

Пухнă çăмран вырăнтах ăшă япаласем сыхаççĕ. Райцентрти служащисемпе хилхуçи хĕрарăмсем боецсем валли алшиисем, носкисем сыхма 62 килограмм çăм илнĕ. Вăл шутран больницăра ĕçлекен хĕрарăмсем хăйсем кăна 25 килограмм çăм илнĕ. Халĕ вĕсем пурте хĕрсех алшиисем, носкисем сыхаççĕ.

АВИАТОР-ГВАРДЕЕЦСЕМ

Фронт линийĕ урлă Леонид Рейне подполковникăн штурмовикĕсем вĕçсе кайрĕç. Каç пулас умĕн вĕсем каялла тавăрăнса самолетсене аэродром çине лартаççĕ те, ывăнса çитнĕ пирки подполковник патне тайкаланкаласа пырса, шăппăн çапла каласа параççĕ: «Çавăн чухлĕ танк, çавăн чухлĕ автомобиль, çавăн чухлĕ пехота пĕтерсе тăкрăмăр».

Штурмовиксен хăйсен чĕлхи пур. Подполковник Леонид Рейне полкĕнчи çынсем хăйсен вĕçевĕсем мĕнле вĕçленнине яланах тĕплĕн пĕлсе тăраççĕ. Вĕсем çӳлтен вĕçмеççĕ, çавăнпа та танксене те, автомобильсене те, çул тăрăх пыракан çынсене те аванах кураççĕ. Хăрушлăх? Шикленӳ? Вилĕм? Штурмовиксем çинче вĕçекен çынсем пурнăçа юратаççĕ пулин те, ăна çавтери хаклаççĕ пулин те, кун пек ыйтусем пирки шутласа-туса тăмаççĕ. Вăхăчĕ çавна ыйтать, хаяр вăрçăн условийĕсем çавнашкал: вилĕме курайман хăюллă çын кăна çапăçура çĕнтерет. Çавăн пек çынсем ĕçлеççĕ те ĕнтĕ пирĕн штурмовой авиацире.

Леонид Рейне штурмовиксен уйрăмлăхĕсем çинчен тĕлĕнмелле илĕртӳллĕн каласа пама пултарать. «Штурмовиксем вĕсем — универсальнăй çынсем», тет вăл.

Блиндажра артиллерист ларать пултăр. Вăл пĕр-пĕччен вăрçăра нимĕн те тума пултараймасть. Ăна наводчик, наблюдатель, орудие аваpлаçа тăраканни кирлĕ. Унтан тата çав çынсем хушшинче çирĕп çыхăну кирлĕ, вара оруди расчечĕ тăшмана нимĕн йăнăшсăрах аркатса тăкма пултарать.

Фронтăн малти линийĕнче пулеметчик выртать пултăр. Ăна та хăйне пулăшакан çын, армири чĕлхепе каласан, «иккĕмĕш номер» кирлĕ.

Водитель автомобиль е танк çинче çӳрет пултăр. Вăл пĕр вăхăтрах артиллерист та, пулеметчик та, механик та пулма пултараймасть.

Анчах та этем «штурмовик» ятлă самолет шутласа кăларнă. Вăл самолет çинче мĕн пурĕ те пĕр çын кăна. Вăл сывлăша вĕçсе хăпарса каять те, вара çӳлте ăна пĕр вăхăтрах авиатор та, артиллерист та, пулеметчик та, бомба пăрахакан та пулма тивет: самолет çинче тупă та, пулемет та, бомбăсем те пур. Летчик-штурмовикăн çав хаяр хĕçпăшалсене пурне те тĕплĕн пĕлмелле, ăна алла илмелле. Сывлăшра хăюллăн, паттăрлăн, нимĕн сухалсăр каймасăр, математикăри пек тĕрĕс расчетпа çапăçмалла, сывлăшра тата çĕр çинче йĕрипеллавра пулса иртекен пур событи пирки те татăклă решенисем йышăнма пĕлмелле.

Леонид Рейно—пысăк опытлă пилот. Тактикăллă пĕлĕвĕ те унăн питĕ пысăк. Вăл хăйĕн искусствине пĕрре кăна мар кăтартса панă. Штурмовик тăшман колонниссем çинче, унăн тылĕ сийĕн, зенитнăй артиллерин вут-хĕмĕ хушшинче вĕçсе çӳрет, нимĕçсене тупăпа, пулеметпа персе ăшалантарать, машинăсемпе çар хатĕрĕсене аркатса сывлăша сирпĕнтерет, танксем çине бомбăсем тăкать. Çак ĕçсене пурне те пĕр çын—подполковник Леонид Рейно пĕчченех тăвать. Унăн летчикĕсем те, хăй сăмахĕпе каласан, «универсальнăй çынсем» те тăшмана çавнашкалах штурмлаççĕ, мĕншĕн тесен сывлăшра ĕçсене артиллерист та, пулеметчик та, бомбометатель те пулма тивет.

Халĕ çак полк «6-мĕш гвардейски полкĕ» ятне илчĕ. Ку чаплă ята вăл хаяр çапăçусенче хăюллăн та паттăрлăн çапăçнипе тивĕçлĕ пулчĕ. Тата тăватă истребительнăй авиаци полкĕсем гвардейски полк ятне илчĕç.

Пĕрремĕш гвардейски авиаци полкăн командирĕ майор Алексей Юдаков капитан Тормозовăн паттăр та чаплă ĕçĕ çинчен каласа пама пултарать. Сывлăшра тăшман гранатин ванчăкĕсем пырса тивнипе Тормозов юлташ самолечĕн бензин бакне вут хыпса илнĕ пулнă. Анчах та Тормозов юлташ, нимĕн çухалса каймасăр, пожара сывлăшрах хăварт сӳнтернĕ те хамăр аэродрома таврăннă. Нимĕнрен малтан вăл хăйне панă боевой заданине ăнăçлăн пурнăçлани çинчен, унтан вара сывлăшра пожар мĕнле сӳнтерни çинчен рапăртланă.

Майор сире лейтенант Гудин юлташпа паллаштăрма пултарать. Гудин юлташ сывлăшри çапăçусенче мĕнпур патронсене персе пĕтернĕ пулнă. Анчах та тăшман бомбардировщикĕпе тĕл пулсан, патрон пĕтнине пăхмасăрах, ăна хирĕç çапăçма пуçланă. Вăл пысăк ăсталăхпа летчиксен искусствине ĕçе янă — тăшман самолетне таран йĕркипе çаннă. Тăшман бомбардировщикĕ çĕре персе анса арканса кайнă. Гудин юлташ тĕрĕс-тĕкелех хамăр аэродром çине таврăннă.

Майор Даниил Шпак полкĕнче Прокопенко капитанăн паттăрлăхĕ çинчен каласа пама пултараççĕ. Прокопенко юлташ тăр пĕччен виçĕ немĕç истребительне хирĕç çапăçăва кĕнĕ. Вăл çав истребительсене аэродром çине таврăннă чух тĕл пулнă. Пирĕн истребительсем тăшман умĕнче нихăçан та хăраса ӳкмеççĕ, унтан тармаççĕ. Прокопенко юлташ та тăшманран тарман. Çапăçура вăл аманнă. Кабинăра ракетăсем пырса ӳксе çунма пуçланă. Вăл çунакан ракетăсене иле-иле ывăтнă та, тăшман самолечĕсене пулеметран персе хăваласа пынă. Тăшман самолечĕсенчен пĕрине вут хыпса илнĕ. Вăл çĕре персе аннă. Икĕ истребителĕ каялла тарнă.

Кунта, Даниил Шпакăн 3-мĕш гвардейски полкĕнче чаплă комиссарăн, старший политрук Виноградов юлташăн мухтавлă ячĕ нихăçан та манăса тухас çук. Виноградов юлташ хăйĕн патронсем пĕтсе çитнĕ пулин те, тăшман бомбардировщикне хирĕç çапăçма пуçланă. Вăл боевой задание пурнăçланă хыçăн таврăнма тухнă пулнă. Анчах та хамăр оборонăн питех те кирлĕ объекчĕ çинче вĕçсе пыракан тăшман бомбардировщикне курсан, унăн çулне пӳлме шутланă. Виноградов фашист самолетне хăй самолечĕпе çапса антарнă. Анчах çав самантра тăшман ăна ывăнăр амантнă. Виноградов юлташ, самолетне урăх тытса пыма пултарайман пирки, геройла вилĕмпе вилнĕ. «Çапла пурăнаççĕ, çапла çапăçса вилеççĕ чăн-чăн совет истребителĕсем», — теççĕ ун çинчен летчиксем. Халĕ эпир çапла калама пултаратпăр: «Çапла пурăнаççĕ, çапла çапăçаççĕ тăшмана хирĕç авиатор-гвардеецсем, хăйсен штыкĕсем çинче тăшманăн — вилĕм, тăван халăхăн — çĕнтерӳ çĕкленсе сӳрекен вырăс гвардейски полкĕсен боевой традицийĕсене тата тепĕр хут вилĕмсĕре кăлараканскерсем».

Авиаци гвардийĕ хальхи вăхăтра Мускав сывăхĕнчи вырăнсенче çапăçать. Вăрçăн чи йывăр кунĕсенче тăшмана çĕнтерсе пынă летчик-гвардеецсем совет авиацийĕ тăшманăн хăрушă вăй пулса тăпине пĕрре мар кăтартса пачĕç. Унăн вăйне нимĕç дивизийĕсем малашне те пĕрре кăна мар хăйсен çурăмĕ çинче тӳссе пăхĕç.

О. КУРГАНОВ.

(«Правда», декабрĕн 7-мĕш).



ФРОНТА СНАРЯДСЕМ ЫТЛАРАХ ПАРАР! **Укерчĕн çинче:** Н-ски заводра (Ленинград) снарядсен корпусĕсене йышăнни. Малта (сылтăмра) контролер А. Шебанова комсомолка.

А. МИХАЙЛОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроникин).

Профсоюз членĕсем çар ĕçне вĕренеççĕ

Государственнăй банкăн Чăваш республикинчи конторинче ĕçлекенсем отечественнăй вăрçăн хаяр кунĕсенче Хĕрлĕ Çара ытларах та лайăхрах пулăшас шухăшпа пурăнаççĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕн Сталин юлташăн докладне радио тăрăх итленĕ хыçсăнах Госбанкăн Чăваш республикинчи конторинче ĕçлекенсен коллективĕ çар ĕçне активлăн хутшăнчĕ. Кашни сотрудник — хĕрарăмсемпе арçынсем пурте—çар ĕçне тата санитари-медицина ĕçне вĕренме тытăнчĕç. Çар ĕçне вĕреннипе çĕршывăн тылне тĕреклетеççĕ, вăхăт çитсен, алла хĕçпăшал тытса тăшмана хирĕç тухма хатĕрленеççĕ. Сентябрь уйăхĕнче сандружинăсен курсĕнче 9 хĕрарăм вĕренсе тухрĕç. Вĕсем халĕ финанс тата банк ĕçĕнчи работниксен профессиллĕ союзĕн обкомĕн сандружининче тăраççĕ. Медсестрасем хатĕрлекен курсра ĕçрен татăлмасăр 6 çын вĕренет. Вĕсем пурте комсомолкăсем.

Коллективра ПВХО инструкторĕсем 6 çын. Вĕсем хулари ĕççыннисене тăшман сывлăшран тапăннинчен тата химилле тапăнуран сыхланма вĕрентеççĕ. Инструктор Добронравова юлташ пирĕн коллективра ПВХО инструкторĕсем хатĕрлекен кружока ертсе пырать. Çав кружокра 6 çын вĕренет.

Хĕрлĕ Çар валли çар ĕçне лайăх пĕлекен резервсем хатĕрлемелле. Çакă вăл питĕ те хисеплĕ ĕç. Çавна шута илсе, пирĕн коллективри çынсем, обязательнăй йĕркепе вĕренекенсемсĕр пуçне, çар специальноçне 110 сехетлĕ программа тăрăх 8 çын вĕренеççĕ. Вĕренĕве местком председателĕ Чинаев юлташ ертсе пырать.

Сталин юлташăн докладне сӳтсе-явăнă хыçсăн пирĕн коллективри хĕрарăмсем стрелковăй кружок организацилерĕç. Çав кружокра халĕ 14 хĕрарăм вĕренет. Ку ĕçе те Чинаев юлташ ертсе пырать.

Оборона фондне коллектив 9 пин тенкĕ укçа тата нумай пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пачĕ. «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума чĕнинне пирĕн коллективра ĕçлекен çынсем ырларĕç. Бронепоезд тума кĕске вăхăтрах 1244 тенкĕ укçа пухрĕç. Çак лайăх пуçарăва çамрăксем çеç мар, ытти сотрудниксем те ырларĕç. Смирнова, Обухова, Рожнова, Захаров, Корчагин, Алексеев юлташсем 100—150-шер тенкĕ пачĕç.

Вăрçă фрончĕсенче юнлă, хаяр çапăçусем пынă кунсенче эпир тунă ĕçсемпе лăпланса ларманăпăр, кашни кун Хĕрлĕ Çара мĕнпе те пулин пулăшса пыма тăрăшатпăр, Оборонăна, çар ĕçне хамăр тимлĕн вĕренсе пынисĕр пуçне, хулари ĕççыннисене ПВХО правилисене вĕрентес ĕçе те активлăн хутшăнатпăр. Хамăрăн социализмлă çĕршыв обороний фондне куллен ӳстерсе пырса, тăшмансене часрах çапса çĕмĕрме тăван Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшса тăратпăр.

Е. КАЛИНОВСКАЯ.

Финанс тата Банк работникĕсен Союзĕн Обком председателĕ.

Профтехшкулти комсомолецсем

ÇЕРПУ. Профтехшкулти комсомолецсем ăмăртса вĕренеççĕ. Вĕренӳпе ĕçре вĕсем яланах малти ретре. Барсукова комсомолка машни уйăхрах производство планне 120—135 процент, Иванова—113 процент, Васильева—110 процент, Кузнецова—106 процент иртерсе тултараççĕ.

Шкулти комсомол организацийĕ (секретарĕ Кислухина) тăван Хĕрлĕ Çарпа Флота пулăшу парассине хăйĕн тивĕçлĕ ĕçĕ тесе шутлать. Боецсем валли ваткă хурса çĕленĕ 13 брюки, 17 фуфайка, 26 алшăлли, 7 мăшăр тăлха, 7 ăшăр алшăри, аялтан тăхăнмалли 16 мăшăр кĕпе-йĕм тата çĕлĕк, пир, çăм пухса панă.

Çакăн пекех тата комсомолецсемпе çамрăксем ноябрĕн 23-мĕшĕнче воскресникре активлăн хутшăнса 467 тенкĕлĕх ĕçленĕ. Воскресникре ĕçлесе тупнă укçа танксем колоннине тунă çĕре панă.

«Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухасси те пысăк çĕкленӳпе пырать, ноябрь уйăхĕ вĕренненĕ тĕлĕ пурĕ 510 тенкĕ пухнă.

Профтехшкулта вĕренекен комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче политикăлă-массăллă ĕç те аванах пулса пырать. Кунта кашни эрнерех 2 сехет политкалаçусем, кашни кунах информацисем пулаççĕ. Калаçусемпе информацисене Фиргер коммунист иртперет.

„Комсомол Чувашии" бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухаççĕ

КАЛИНИНО. Районри комсомолецсемпе çамрăксем тата ĕççыннисем хушшинче «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухасси анлăн сарăлса пырать.

Малти Кăкшăмри «Красный кавалерист» колхозра, колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕнче, Сталин юлташăн историллĕ докладчĕпе сăмахне ăнлантарса панă хыççăн 171 çын бронепоезд тума кашни пĕрер ĕçкунĕ пуçне тивекен тупăшăн хакне укçан пама йышăннă. Колхозниксемпе колхозницăсем бронепоезд тума кĕске вăхăтрах 1244 тенкĕ укçа пухрĕç. Çак лайăх пуçарăва çамрăксем çеç мар, ытти сотрудниксем те ырларĕç. Смирнова, Обухова, Рожнова, Захаров, Корчагин, Алексеев юлташсем 100—150-шер тенкĕ пачĕç.

Вăрçă фрончĕсенче юнлă, хаяр çапăçусем пынă кунсенче эпир тунă ĕçсемпе лăпланса ларманăпăр, кашни кун Хĕрлĕ Çара мĕнпе те пулин пулăшса пыма тăрăшатпăр, Оборонăна, çар ĕçне хамăр тимлĕн вĕренсе пынисĕр пуçне, хулари ĕççыннисене ПВХО правилисене вĕрентес ĕçе те активлăн хутшăнатпăр. Хамăрăн социализмлă çĕршыв обороний фондне куллен ӳстерсе пырса, тăшмансене часрах çапса çĕмĕрме тăван Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшса тăратпăр.

Т. БЕЛОВ.

* * *

Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвне илтсен, Шупашкарти пĕрремĕш номерлĕ шкулти пионерсемпе шкул ачисем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укçа-тенкĕ пухас ĕçе кĕрӳллĕн тытăнчĕç. Кашниех мĕн чухлĕ те пулин укçа парса тăван çĕршыва пулăшас шухăш-кăмăлпа çунать.

Вунă кун хушшинче шкулĕпе 1.548 тенкĕ укçан тата 10.800 тенкĕлĕх заем облигацийĕ пухăннă.

Отечественнăй асла вăрçă кунĕсенче ачасем 5 тонна тимĕр-тăмăр, 53 килограмм цветной металл, 143 килограмм шăлан сырли пухнă.

7-мĕш «А» класра вĕренекенсем (класс руководителĕ Иванова юлташ) бронепоезд тума 101 тенкĕ укçа, 1.270 тенкĕлĕх облигаци пухса панă.

5-мĕш «А» класра (класс руководителĕ Матвеева юлташ)—109 тенкĕ укçа тата 370 тенкĕлĕх облигаци пухнă.

— Пирĕн пулăшу юратнă тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетме кайнине эпир аван пĕлетпĕр. Çавăнпа Хĕрлĕ Çара пулăшма пĕтĕм вăйпан тăрăшатпăр. Унсăр пуçне эпир вăрçă кунĕсенче лайăх вĕренме пулатпăр,—теççĕ ку шкулта вĕренекенсем.

* * *

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ. Октябрьски районри «Большевик» промартельри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвне районри пионерсемпе шкул ачисем те пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Уйпуçĕнчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем бронепоезд тума 200 тенкĕ укçа пухса панă.

Ю. ОСИПОВ.

Халăхпа Хĕрлĕ Çаран туслăхĕ

Фронтпа тыл хушшинче туслă çыхăну пулни фашистла вăрă-хурахсене хăвăртрах çапса аркатма пулăшать. Фронтпа тылăн пĕрлĕхлĕ вăйĕ—никам çĕнтерейми вăй.

Хĕрлĕ Çаран паттăр боецĕсене продовольствипе те, ăшă тумтирсемпе те—пур майсемпе те пулăшасси пирĕн çĕршыври ĕççыннисен таса тивĕçĕ пулса тăчĕ. Хăйсен çак тивĕçне ĕççыннисем лайăх ăнланаççĕ.

Яргунькинăри «Броневик» колхоз члечĕсем ку тĕлĕшпе лайăх пуçару турĕç. Вĕсем оборона фондне ăшă тумтирсем, продовольстви ярса панипе пĕрлех, Хĕрлĕ Çар часĕне тӳррĕмĕн çыхăну тытса,вĕсене пулăшса тăраççĕ. Октябрь уявĕ ячĕпе боецсем валли колхоз пĕр центнер кишĕр, 51 килограмм типĕтнĕ çĕрулми, 8 килограмм туранă табак тата 2 автан ярса панă.

Боецсемпе колхозниксем хушшинчи туслă çыхăну ӳссех пырать. Ноябрĕн 18-мĕшĕнче колхоз боецсем валли 10 килограмм аш-какай, 8 килограмм махорка тата пĕр килограмм шĕратнă сӳ ярса панă.

Колхозниксем ăшă кăмăлпа ярса панă парнесене илсен, Хĕрлĕ Çар подразделенийĕн командирĕ колхоз председателĕ патне тав туса çыру янă.

Хĕрлĕ Çар командирĕн çырăвне колхозниксен пухăвĕнче вуласа панă хыççăн колхозницăсем ытларах ĕçлерĕç. Ĕçсем пĕрин хыççăн тепри ăнăçлăн вĕçленсе пычĕç. Колхозницăсем ĕç тухăçлăхне ӳстернĕçемĕн ӳстереççĕ. Авăна икĕ сменăпа сапнă.

Колхоз производствинче çамрăксем те, ваттисем те пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Иккĕмĕш бригада, авăн çапса пĕтерсен, ĕç итогне турĕ. Бригада членĕсем тырпулсене уйран пустарса кĕнĕ чухне те, авăн çапнă вăхăтра та пысăк хастарлăх кăтартса ĕçленĕ. 66 çулти А. Якимова колхозница авăн çапнă çĕрте 31 ĕçкунĕ тунă. Кунсăр пуçне вăл çĕнĕ йĕрке тăрăх 21 килограмм тĕштырă илет. М. Щербакова колхозница та авăн çапнă çĕртех 3 центнер ытла тĕштырă илмелĕх ĕçленĕ. Н. Савельева колхозница авăн çапнă çĕрте ĕçленĕшĕн 2 центнера яхăн тĕштырă илет.

Колхозра ĕçе хутшăнманнисем çук. Пурте вĕсем ялхуçалăх çулне хăвăртрах вĕçлес тата çуракине кăтартулăн хатĕрленес тесе тăрăшса ĕçлеççĕ.

С. ГОРЛАНОВ.

Колхозниксем пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ

ИШЛЕЙ. «Ырашпулăх» колхозра ялхуçалăх ĕçĕсенче колхозницăсем ытларах ĕçлерĕç. Ĕçсем пĕрин хыççăн тепри ăнăçлăн вĕçленсе пычĕç. Колхозницăсем ĕç тухăçлăхне ӳстернĕçемĕн ӳстереççĕ. Авăна икĕ сменăпа сапнă.

Колхоз производствинче çамрăксем те, ваттисем те пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Иккĕмĕш бригада, авăн çапса пĕтерсен, ĕç итогне турĕ. Бригада членĕсем тырпулсене уйран пустарса кĕнĕ чухне те, авăн çапнă вăхăтра та пысăк хастарлăх кăтартса ĕçленĕ. 66 çулти А. Якимова колхозница авăн çапнă çĕрте 31 ĕçкунĕ тунă. Кунсăр пуçне вăл çĕнĕ йĕрке тăрăх 21 килограмм тĕштырă илет. М. Щербакова колхозница та авăн çапнă çĕртех 3 центнер ытла тĕштырă илмелĕх ĕçленĕ. Н. Савельева колхозница авăн çапнă çĕрте ĕçленĕшĕн 2 центнера яхăн тĕштырă илет.

Колхозра ĕçе хутшăнманнисем çук. Пурте вĕсем ялхуçалăх çулне хăвăртрах вĕçлес тата çуракине кăтартулăн хатĕрленес тесе тăрăшса ĕçлеççĕ.

С. ГОРЛАНОВ.

Физкультура ĕçне вăрçă интересне пăхăнтармалла

Пирĕн çĕршыв çине сĕмсĕрленсе кĕнĕ немĕç захватчикĕсене хирĕç Совет Союзĕ отечественнăй асла вăрçă туса пырать. Нимĕç империалисчĕсем ССР Союзĕнчи халăхсене хирĕç пуçарăкластискер, юнлă тата хаяр вăрçă ултă уйăх хушши пырать ĕнтĕ. Пире хирĕç вăрçă пуçарса, фашистсем çăмăллăнах çĕнтерме шутланă, вĕсем вăрçа хăварт пĕтерсе Англи çине, кайран вара Америка çине талăнма тата пĕтĕм тĕнчине «ариецсем» пуçпулса тăмалла тума шутланă. Пилĕк уйăх хушшинчи вăрçăн итогĕсем немĕç захватчикĕсен «çиçĕм пек хăварт» вăрçин планĕ арканса кайнине кăтартса параççĕ. Вăрçă вăрăма чăсăлса пырать, çакăнтан вара фашистсем тата вĕсен прасителĕсем питех те хăраннă, хăраççĕ те. ССР Союзне хĕл пуличчен çĕнтерессишĕн немĕç çарĕн командованийĕ темĕн чухлех тăрăшнă, Гитлер приказсем çырнă. Анчах вырăссен сивĕ хĕлĕ çитрĕ. Халĕ ĕнтĕ гитлерла йыткăтĕвĕсен вырăс хĕлĕн сивлине тӳсме лекет.

Хĕл вăхăчĕ немĕç империалисчĕсене тата вĕсен çарне хирĕç вĕрешнĕ çĕрте вырăс халăхĕшĕн шанчăклă тус пулса тăрать. Анчах çав вăрă-хурахсене хăйсен ирĕр ĕçĕсене туса пыма хĕл хăй кăна чăрмантарать, тесе шутлани йăнăш пулнă пулĕччĕ. Хĕл пире тăшмана хирĕç кĕрешме çăмăллатать.

Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă докладра пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăх çинчен тепĕр хут асăхтатрĕç. «Халĕ,— терĕ Сталин юлташ,—вăрçăн тăватă уйăх хушшинчи итогĕ çинчен калана май маларах çакна палăртмалла: çав хăрушлăх вăйсăрланнипĕр кăна мар, пĕтĕмпех урăхла, вăл татах та ытларах вăйлаччĕ».

Халĕ пирĕн кашнин çав хăрушлăха тавçăрса илмелле тата тăшмана çĕнтерме фронта мĕн кирлине пурне те туса памалла. Ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле, фронта танксем, танксене хирĕç пемелли орудисем, самолетсем, тупăсем, миномĕтсем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем, тырпул тата ăш-какай, промышленность валли чĕртавар ытларах та ытларах парса тăмалла. Сталин юлташ чĕнсе каланине пурнăçа кĕртсе, Чăваш республикинчи ĕççыннисем ывăнма пĕлмесĕр тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ. Пирĕн республикăри ĕççыннисем пĕр шухăш-кăмăлпа, пĕр тĕллевпе—нимĕç фашисчĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ. Вĕсем мĕнпур ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетеççĕ.

Мĕнпур ĕçе фронт интересĕсене пăхăнтарса шыраппе пĕр вăхăтрах пирĕн Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлемелле. Хĕрлĕ Çар ретне каякансен тăшмана хирĕç кĕрешме çирĕп те хăюллă пулмалла, вĕсен кирек мĕнле йывăрлăха та тӳссе ирттерме хăнăхмалла. Пирĕн ку тĕлĕшпе çынсене кашни кун, кашни сехетре хатĕрлемелле. Хĕрлĕ Çар валли юрăхлă пополнени хатĕрлĕçĕри чи кирлĕ пысăк мероприятисенчен пĕри вăл—çынна сывлăх енчен хатĕрлени пулать. Çавăнпа та физкультура ĕçĕ пĕтĕм халăха çар ĕçне вĕрентессин уйăрăмлă пайĕ пулса тăрать.

Пирĕн физкультурăна отечественнăй асла вăрçăн задачисемпе çыхăнтармалла, ăна, уйрăмах йĕлтĕр спортне, вăйлатсах пымалла. Йĕлтĕрпе çӳреме вĕренни çынна йывăрлăхсене çăмăллăнах тӳссе ирттерме хăнăхтарать, çирĕплетет тата хĕçлăх парать.

Мĕнпур предприятисенче, организацисемпе колхозсенче, райвоенкоматсен вĕренӳ пунктĕсенче, вĕренӳ заведенисенче физкультура ĕçне пур майсемпе те вăйлатса пымалла. Халăх, уйрăмах çамрăксем хушшинче физкультура ĕçĕ çӳлти пусăмра пулмалла. Çак ĕçре çамрăксем пример кăтартмалла. Физкультура бассĕсем çар вĕренĕвĕн питĕсĕ пулса тăнине вĕсен ăнланса илмелле. Çавăнпа та çамрăксене çар ĕçне вĕрентесси, вĕсем çар специальноçне вĕренсе алла илесси—пулас боецсене физически енчен хатĕрлессине сыхăнса пымалла.

СССР Обороний Государственный Комитечĕн постановленине пурнăçа кĕртсе пырса, Чăваш республикинчи физкультура организацийĕсем физкультура мероприятийĕсене физкультурниксем, всевобуч боецĕсем, призывниксем тата шкул ачисем хушшинче пурнăçласа пыма тытăнчĕç. Республикăра семинарсем урлă штыкпа тăрса çапăçас ĕçĕн инструкторĕсене 110 çын, йĕлтĕр ĕçĕн общественнăй инструкторĕсене 100 çын хатĕрленĕ. Хальхи вăхăтра хĕллехи спортăн инструкторĕсене хатĕрлекен семинарсен шучĕ хутшăнсах пырать. Пĕр Шупашкар хулинче кăна шкул ачисем 54 çын йĕлтĕр спорчĕн инструкторĕсем тата 30 çын штыкпа тăрса çапăçас ĕçĕн инструкторĕсем пулма вĕренеççĕ. Йĕпреç районĕнчи Хурамалти вăтам шкулта штыкпа тăрса çапăçма вĕренмелли кружок ĕçлет, унта 31 çын вĕренет. Йĕпреçри вăтам шкулта штыкпа тăрса çапăçма 20 çын вĕренет. Шупашкар районĕнчи Кӳкеç, Иккасси, Абаш тата Шомшер вăтам шкулĕсенче штыкпа тăрса çапăçма вĕренмелли тата йĕлтĕр спорчĕн секцийĕсене организацилеççĕ, вĕсенче призыв çулне çитнĕ шкул ачисем тата çав ялсенчи всеобщообязаннăйсем вĕренеççĕ.

Всевобуч боецĕсене валли спорт базисемпе инвентарьсем панă. Занятисем ирттерме пиншер мăшăр йĕлтĕр панă. Пысăк квалификацийлĕ преподавательсем тата физкультура инструкторĕсем уйăрнă. Чылай районсенче тата Шупашкар хулинче всевобуч боецĕсене тата шкул ачисене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентме тытăннă. Ишлей районĕнче йĕлтĕрçĕсен командисем октябрĕн 16-мĕшĕнчен, Йĕпреç районĕнче—октябрĕн 24-мĕшĕнчен, Шупашкар хулинче ноябрĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа тренировкăсем ирттереççĕ.

Шупашкарти вĕренӳ пунктĕнче çирĕп йĕлтĕр ĕçне спорт мастерĕ Гущина юлташ вĕрентет. Хĕрлĕ Чутай районĕнче занятисене спорт мастерĕ Иванов юлташ ирттерет. Республикăри колхозсенчи çамрăксем те йĕлтĕр спортне активлăн хутшăнма тытăнчĕç. Анчах ку вăхăтчен тунă ĕçсем çителĕксĕр. Комсомолăн, профсоюзсен тата Осоавиахимăн уйрăм организацийĕсем тата хăшпĕр физкультурниксем ĕçе тивĕçлипе пуçарса яман, вĕсем хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетес тĕлĕшпе питех те вăрахăн ĕçлеççĕ. Всевобуч подразделенийĕсенче, шкулсенче, учрежденисенче, предприятисенче тата колхозсенче йĕлтĕр спорчĕн инструкторĕсем çителĕксĕрри палăрать, анчах, апла пулсан та, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ, ВЛКСМ обкомĕ, Осоавиахимăн Центральный Совечĕ, профсоюзсен обласăри комитечĕсем инструкторсем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçе çине тăрса тытăнман. Спортинвентарьсене пур районсенче те мар учета илсе тухнă, юсамаллисене юсамаç. Физкультура организацийĕсем тата ĕçлĕхсенче валли районсенчи артельсенчех йĕлтĕрçем туса кăларассине пур майсемпе те вăйлатса пымалла, кашни комсомолецăн, физкультурникăн, всевобуч боецĕн, призывникăн, шкул ачин йĕлтĕрçем тумалла.

Çак мероприятисене хăвăртрах пурнăçа кĕртме пирĕн условисем çителĕклĕ. Уйрăм районсенче çав задачăсене пурнăçлама тытăннă. Ишлей районĕнчи Шурка тата Ярапайкасси туллимар вăтам шкулĕнче вĕренекенсем хăйсем валли йĕлтĕрçем тунă, тренироваçăм ирттерме тытăннă. Вăрмар районĕнче вырăнти промартельсен, колхозсен тата граждансен вăйĕпе 1021 мăшăр йĕлтĕр туса хатĕрленĕ. Етĕрне районĕнче 444 мăшăр йĕлтĕр тунă. Анчах нумай районсенче йĕлтĕрçем тума тытăнманскерсем, Первомайски районсенчи профсоюз, физкультура тата комсомол организацисен руководителĕсем йĕлтĕрçем тăвас ĕçе организацилес тĕлĕшпе хăйсен пуçарулăхне кăтартмаççĕ, вĕсем йĕлтĕрçем тума районра вăрманташ тата специалистсем çук, тесе лаççĕ. Вăрçă кунĕсенче анчах пек ĕçленни килĕшӳсĕр, мĕншĕн тесен кашни мăшăр йĕлтĕр фронтăн пысăк пулăшу пулса тăрать. Çакна манмалла мар: йĕлтĕр винтовкăпа пĕрле çирĕплетмелех шутне кĕрет. Çавăнпа та ĕнтĕ йĕлтĕрçем тăвас ĕçе чăнласа тытăнас пулать.

Халĕ комсомол организацийĕсем, спортобществăсем, вырăнсенчи физкультура коллективĕсем тата пирĕн мĕнпур общественность умĕнче мухтавлă Хĕрлĕ Çар валли йĕлтĕрçĕсен резервне хатĕрлес задача тăрать. Боец-йĕлтĕрçĕн йĕлтĕрпе çӳреме кăна мар пĕлмелле. Унăн йĕлтĕрсене хывмасăр винтовкăран пеме, гранатăсене тĕл ывăтма тата йĕлтĕрпе шуса пыма пĕлмелле. «Çамрăксем, йĕлтĕр çине» текен боевой лозунга республикăри пур районсенче те пурнăçа кĕртмелле. Çакăн пек тумалла: пĕр çын та йĕлтĕр спортне хутшăнмасăр ан юлтăр. ВКП(б) райкомĕсем çав задачăна татса парас тĕлĕшпе комсомол тата физкультура организацийĕсене пулăшмалла.

А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Çулпуç лартнă задачăсене пурнăçлассишĕн

КУКЕÇ. Сталин юлташ аслă Октябрь уявĕн кунĕсенче калланă хăйĕн сăмахĕсенче немĕç захватчикĕсене çапса çĕмĕрмелли çула кăтартса пачĕ. Çулпуçăн тăрĕ сăмахĕсем ĕçсыннисене çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарчĕç, çĕнтерӳ тăвас шанчăка çирĕплетрĕç. Сталин юлташ совет халăхне çĕнтерĕве ывăнмасăр туптама, немĕç оккупантĕсене çапса салатас ĕçре Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота активлăн пулăшма чĕнчĕ.

Çулпуçăн çак кăтартăвĕсем — парти организацисен ĕçри программи пулса тăрать. Вĕсем парти организацисен куллен тумалли ĕçĕсене çутатса парасçĕ. Çулпуç кăтартнисем тăрăх парти организацисен, хăйсен ку тараччăнни ĕçĕсене шăхса тухса, пĕтĕм ĕçе фронт ыйтнă пек тĕпренех урăхлатса çĕнетес пулать. Нумаях пулмасть Шупашкар районĕнчи парти активĕн пухăвĕ пулса иртнĕ. Çав пухура парти райкомĕ Сталин юлташăн докладĕпе сăмахне халăх хушшинче анлăн сарса пыма, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлеме, государство умĕнчи обязательствăсене парса татма кирлине кăтартса хăварчĕ. Партин хăшпĕр пуçламĕш организацийĕсем кун хыççăн хăйсен ĕçне чылаях урăхлатса çĕнетрĕç, колхозсенче политикăллă агитаци ĕçне вăйлатрĕç, колхозниксене уйăрти тырпула пухса кĕме пулăшрĕç. Анчах та районра ку ĕçе пухусенче шавласа илнипех ирттерсе яма пăхакан коммунистсем те пур-ха.

Сталин юлташăн докладне колхозниксене ăнлантарса парас ĕçе партин Альгешри территориальнăй организацийĕ (секретарĕ Максимов юлташ) начар туса пырать. Çак организацире «Чăваш. ЦИК», Ворошилов тата Киров ячĕсемпе тăракан колхозсенчи тата «Паха тĕрĕ» артельри коммунистсем пĕтĕссе тăрасçĕ.

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче парти организацин пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура Сталин юлташ кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртес тĕллĕшпе районри парти активĕн пухăвĕ йышăннисене сӳтсе-явнă. Сталин юлташăн докладне колхозниксене ăнлантарса пама уйрăм коммунистсене колхозсем çумне çирĕплетнĕ. Анчах ĕç вара çакăнтан малалла кайман тесе тӳррипех калас пулать.

«Чăваш. ЦИК» колхозра Сталин юлташăн докладне колхозниксене ăнлантарса парас ĕçе ертсе пыма коммунист Ильинский юлташа хушнă. Анчах Ильинский юлташ Сталин юлташăн докладне хăй те тĕплĕн вуласа тухман, çапла вара колхозниксене те ăнлантарса паман. Колхозниксене Сталин юлташăн докладĕпе сăмахне ăнлантарас тесе шкултан Афанасьев учитель колхоза виçĕ хут пынă. Анчах никам енчен те пулăшу пулманнипе виçĕ хутчен те каялла ним тумасăрах кайнă. Колхозниксем Сталин юлташăн докладне вуламан темелле мар, ăна вĕсем хаçатсем çинче пичетленсе тухсанах вуланă. Анчах çулпуç кăтартса панă задачăсене тарăхăн ăнлантарса пани кирлĕ.

Колхозра пысăк çитменлĕхсем пур. Аван çапасси питĕ вăраххăн пулса пырать. МТС молотилкипе кирлĕ пек усă курмасçĕ. Авăна алăпа çапас ĕçе организацилемен. Бригадăсем тырпула капана хывнă чухне бригадăсем тăрăх уйрăмăн шута илнĕ, çапнă хыççăн пĕрлештерсе янă. Çакăн пек туни колхозниксен ĕçлес кăмăлне чакарать, кашни бригада, звено çу каçиччен ĕçленин результатне сухатать.

Коммунист Ильинский юлташ колхозăн вылăх-чĕрлĕх фермин заведующийĕ пулса ĕçлет. Колхоз ферминче большевикла йĕркелĕх туса, вылăх-чĕрлĕх продуктивноçне хăпартассишĕн ĕçлесе, Ильинский юлташăн колхозниксене пример кăтартса тăрас пулать. Анчах кунта та пысăк çитменлĕхсем пур. Вылăхсене хĕл каçарма колхоз ăшă витесем хатĕрлемен. Сысна витине, тума пуçланăскерне, вĕсене çитермен. Унта мăнпурĕ те çине витессипе чӳрече рамисене лартасси кăна юлнă. Рамисем те, кантăкĕ те пур, анчах вĕсене лартман. Ĕçе пуçарса пырас вырăнне Ильинский юлташ: «Ăшă витере сурăхсем чирлеççĕ, çăмне тăкса çараласçĕ»,—тет. Халĕ вара çĕнĕ витере пурăнас сыснасене сурăх витине хупаççĕ, сурăхĕсене сивĕ картара выртгараççĕ. Ĕнесем пăрулама тытăнаççĕ ĕнтĕ, анчах колхозăн çамрăк пăрусене усрама ăшă вите çук-ха. Çак çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме пур майсем те пур, анчах çав «пĕчĕк ĕçсем» çине коммунистсен тивĕçлипе çавăрăнса пăхни çеç çитмест. Ильинский юлташăн парти организацийĕ хушнă ĕçсене большевикла сивĕчлĕхпе пурнăçлас пулать. Колхоз производствине хăвăрт çĕклеме кашни колхозника ĕçе явăçтармалла. Коммунистсен ĕçсыннисем хушшинчи массăллă ăнлантару ĕçне вăйлатмалла. Партин пуçламĕш организаци секретарĕн Максимов юлташăн уйрăм коммунистсем парти поручненийĕсене епле пурнăçласа пынине тĕрĕслесех тăрас пулать.

Партин Альгешри территориальнăй организацин ĕçне Сталин юлташ кăтартса панă задачăсем тăрăх урăхлатса çĕнетес пулать. Парти организацин ялти актив çине таянса пур колхозниксене те Сталин юлташ лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилес пулать.

Т. ЛОГИНОВ.

Вăрçă вăхăтĕнчи професси

Инструктор машинăна гараж умĕнчи пĕчĕк площадкăна илсе тухса лартрĕ. Вăл унăн моторне тĕрлĕ хăвăртлăхсемпе ĕçлеттерсе пăхрĕ, картерти аэтол мĕн чухлине виçрĕ, рулевой управленине çавăркаласа тĕрĕслерĕ. Унтан, машина ăшĕнчен тухса, кабинăн сылтăм енне куçса тăчĕ.

Гаражпа тĕлме-тĕл çуртĕн иккĕмĕш хутĕнче шăнкăрав шăнкăртатни илтĕнсе кайрĕ. Унччен те пулмарĕ, шалта кăвак комбинезонсем тăхăннă пĕр ушкăн çамрăк хĕр чупса тухрĕ. Хĕрсем автомашина умĕнчи инструктора пур енчен те хупăрласа илсе пĕр-пĕринчен ăмăртса тенĕ пек тилмĕрме пуçларĕç:

— Павăл Павăлч, паян камăн черет?

— Терентьева ĕнер кăна 45 минута çӳрерĕ..

— Паян манăн черет.

Инструктор хĕрсене хирĕç ответлес вырăнне кăсăнчен путевка кăларчĕ те унăн тепĕр енне ик-виçĕ хушамат çырса хучĕ. Унтан, путевкине каллех кăсăнне чиксе, хĕрсем енне çавăрăнчĕ.

— Арефьева, Казакова, Просфирина, юлатăр. Ыттисем ыран тăхăр сехетре килетĕр,—терĕ вăл ĕшенчĕкрех сасăпа.

Хăйсен ячĕсем тухнă хĕрсен куçĕсем савăнăçлăн çутăлса кайрĕç, ыттисем темĕнле кăмăлсăрланнă пек пулчĕç.

— Тĕрĕслĕр машинăна,—хушрĕ инструктор. Хĕрсем машинăн юсавлăхне васкамасăр, тĕплĕн тĕрĕслерĕç те инструктора каласа пачĕç:

— Машинăна тĕрĕслерĕмĕр.

— Арефьева, лар кабинăна,—хушрĕ инструктор.

Çамрăк хĕр, малтанхи пекех нимĕн хыпаланмасăр, кабинăна канлĕн вырнаçрĕ. Инструктор унпала юнашар ларчĕ.

— Заводи!

Арефьева зажигани çăраççине уçрĕ, газ манеткине кăштах аялалла илчĕ, рычага «нейтральнăй» çине лартрĕ, унтан сылтăм урине стартер çине çирĕпрех пусса темиçе оборот пачĕ. Мотор çавăнтах кĕрлесе кайса ĕçлеме пуçларĕ.

* * *

Кашни кун çакăн пек хĕрӳ вĕренӳ пырать Шупашкарти автомотошкулта. Кунта хулари хĕрсем вăрçă вăхăтĕнчи профессие вĕренеççĕ. Çĕршыв çине фашистла çĕлен-калтасем тапăнса кĕнĕ вăхăтра, пирĕн пĕтĕм совет халăхĕ гитлĕрла захватчиксене хăватлă отпор панă кунсенче, ĕçхалăхĕн таса чĕрине —Мускава хăрушлăх хупласа тăнă самантра тылăн пурнăçĕпе ĕçĕ пĕтĕмпех фронтри пек пулса тымалла. Кашни çын,—арçын-и вăл, е хĕрарăм-и, ватă-и çăпă-и,—пĕтĕм вăя, пĕтĕм пултарулăха фронта пулăшма памалла. Автошкулта вĕренекен хĕрсем çак задачăна лайăх ăнланса илнĕ. Вĕсен нумайĕшĕсен пичĕшĕсем е шăллĕсем, упăшкисем е тăванĕсем фронтра çапăçаççĕ. Вĕсен мирлĕ вăхăтри профессийĕ шофер пулнă. Акă халь вĕсем вырăнне вĕсен йăмăкĕсем, аппăшĕсем, савнă мăшăрĕсем тăма хатĕрленеççĕ.

Шупашкарти автошкул вăрçă вăхăтĕнчи чи кирлĕ специалистсене хатĕрлес тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлет. Нумаях пулмасть шкул пĕр ушкăн мотоциклистсем вĕрентсе кăларчĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем халĕ ĕнтĕ фронтра çапăçаççĕ.

Шофер пулма вĕренекен хĕрсем питĕ тăрăшса вĕренеççĕ. Вĕсенчен уйрăмăнах Арефьева, Терентьева, Казакова, Просфирина, Седреева юлташсене палăртма тивĕçлĕ. Вĕсем вĕренӳ программине, теорие те, практикăна та, отлично паллăсемпе çеç вĕренеççĕ. Арефьева юлташăн—икĕ пиччĕшĕ, ыттисен упăшкисем фронтра çапăçаççĕ.

Преподаватель С. А. Андреев юлташăн ĕçĕ те мухтава тивĕçлĕ. Вăл хăйĕн сывлăхĕ начарлине пăхмасăрах ку ĕçе пĕтĕм пĕлӳлĕхпе ăсталăхне хурать. Çĕршер çамрăка вăл шофера вĕрентсе кăларнă. Халĕ акă çамрăк патриоткăсене çак хисеплĕ профессие илме хатĕрлет.

Шкул инструкторĕ П. П. Стрельцовпа механик Н. А. Бронников куннесĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Хăйсен ĕçне лайăх туса пынине пула шкулăн пур машинисем те яланах юсавлă. Шкул темиçе машина çар валли хатĕрлесе пачĕ. Вăл машинăсене пурне те пĕрремĕш категорипе йышăннă.

И. ТУКТАШ.

Епле чăтать-ши çĕр сире?

Нимĕçсем Киевра еврейсене — арçынсене, хĕрарăмсене тата ачасене — 52 пин çынна асаплантарса вĕлернĕ.

Румыни çарĕ Одессăра октябрĕн 23-мĕшĕнче казармăна еврейсене —арçынсене, хĕрарăмсене тата ачасене — пурĕ 25 пин çынна пухнă та пулеметсемпе персе вĕлернĕ. Персе вĕлернĕ хыççăн казармăна вут тĕртнĕ, вара çав пур вилене те çунтарса янă.

Хаçатсенчен.

Юнпа тулса вĕрет чĕре,
Шăнăçаймасть капланнă çиллĕм...
Тĕнче ылханĕсем!
Çынçиенсем! Çын кĕлеткиллĕ
Шакал-сиенăсем!
Епле чăтать-ши çĕр сире?!

Эсир ют çĕршыва килсе
Апла иккен «йĕрке» тăватăр:
Пăшалсăр çынсемпе,
Арăмсемпе эсир мĕн паттăр,
Тата — ачасемпе..
Эх, намăссăр кĕççе питсем!

Епле истори куç умне
Курнасшăн-ши эсир ăнманă
Тискерлĕхĕрпелен?!
Пĕлетĕр-и — мĕн чухлĕ панă
Эсир хĕсĕрлекен
Еврей ăс-пуçĕ тĕнчене?

Эйнштейн, Маркс, Гейне халăхĕ,—
Тăшман епле кăна ан уртăр —
Вăл пурăнĕ ялан.
Кунта пĕрремĕш хут ак пурте —
Пур йăх ăна тăван,
Пурин пекех ун танлăхĕ.

Пăрахмăпăр эпир ăна.
Пĕлетĕп эп: çĕршывсăр халăх
Тăван çĕршыв тупсан —
Вара вăл пуринчен те хаклă,
Унтан пăхи çук сан,
Вăл саншăн аннӳпе танах.

Эпир те ĕлĕк, тансăрсем,
Çуралнă çĕрсенче те юттăн
Çӳреттĕмĕр сĕнксе.
Анчах Октябрь кӳнĕ çутă
Телейшĕн халь сиксе
Вăрçатпăр ак вута кĕрсе.

Мăшкăллаттармăпăр тăван
Халăхсене! Час тулĕ шалçăр,
Юнпа кӳпен орда!..
Çынна хальччен пулса та кашкăр
Тытман-ха сăнчăрта,
Тытаймĕ те вăл нихăçан!

П. ХУЗАНГАЙ.

Герой ячĕпе тăракан колхоз

Декабрь кунĕ. Ирхи тĕксĕм çанталăк çутăлса çитеймен-ха\ Çул тăрăх пыракан тулли лавсене машинăсем хăваласа иртеççĕ. Вĕсем пурте тĕштырă, пахча-çимĕç тиенĕ лавсем. Шоссе çулĕ тăрăх виçĕ лав хулана сывхараççĕ. Лавсем çинче Хĕрлĕ Çар валли колхозниксем хатĕрленĕ парнесем тиенĕ.

Эпир Типçырмаран тухса Водопьянов ячĕпе тăракан колхоза çитрĕмĕр. Темиçе çул каялла çак колхоза Совет Союзĕн Геройĕ Михаил Водопьянов килсе кайнă. Правление ĕçпе пынă ватă колхозник Водопьянов çинчен калаçма пуçларĕ. Вăл стена çинчи фотоӳкерчĕксене йĕркипе кăтартса герой çинчен паянхи пек аса илсе калать. Нумаях пулмасть колхозниксем Водопьянов статьине хаçатра вуласа тухнă. Вĕсем мухтавлă герой нимĕç оккупантĕсене хирĕç хăюллăн çапăçнине пĕлеççĕ. Хăйĕн пысăк самолечĕпе вăл Рига, Кенигсберг хулисем çине вĕçсе кайса, йывăр туртакан «кучченеçсем» пăрахса хăварнине те колхозниксем пысăк хаваспăхпа вуланă.

— Сталинла саманара ӳссе çитĕннĕ летчикшăн нимĕнле хăрушлăх та çук,—терĕ старик юлашкинчен.

Водопьянов юлташ колхозра пулнă чухне вăл пуринпе те ăшă кăмăллăн калаçнă, юлташла сĕнӳсем парса хăварнă.

Герой парса хăварнă сĕнӳсене колхоз тыслăн пурнăçа кĕртсе пырать. Ахальтен мар колхоза герой ятне панă. Колхоз кашни çул пысăк çитĕнӳсем тунă. Анчах кăçал колхозниксен мирлĕ пурнăçĕ улшăнчĕ.

Колхозниксем уйри тырпула ăнăçлăн пуçтарса кĕртрĕç. Авăн çапасси кăштах вăраха кайрĕ, кĕркунне тăтăшах çумăр çуса тăни чăрмантарчĕ. Хĕл пулчĕ, çанталăк лайăхланчĕ. Колхозниксем хĕрсех авăн çапма тытăнчĕç. Халĕ ĕнтĕ юлашки ыраш капанĕсем юлнă, вĕсене çитес кунсенче, партипе правительство палăртнă срок тĕлне çапса пĕтереççĕ.

Колхозниксем хăйсем тăрăшса ĕçленине пула кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 16—17 центнер тĕштырă туса илнишĕн савăнаççĕ. Пахча-çимĕçсем татах та тухăçлăрах пулнă. Колхоз государствăна пахча-çимĕç парса, вуншар пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Колхозра кашни çулах çĕнĕрен опытсем туса иртереççĕ. Кăçал вылăхсене тăрантармалли арбуз лартса опыт туса пăхнă. Малтанхи опыт вылăх арбузĕ ăнса пулнине кăтартса пачĕ. Колхозниксем çитес çулта ытларах арбуз лартма, çавна май вылăх апачĕ йышлăн туса илме палăртнă.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те начар мар ĕçлеççĕ кунта. Сĕт-çу ферминче кăçал план тăрăх 45 ĕне пулмалла пулсан, 49 пуçа çитернĕ. Государствăна аш-какай, сĕт-çу тăратмалли обязательствăсене колхоз август уйăхĕнчех тултарнă. Фермăри сыснасен шучĕ те планпа пăхнинчен икĕ хут ӳснĕ.

— Вылăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес тесен, вĕсене лайăх пăхмалла, аван условисем туса памалла,—тет колхоз агрономĕ Иванов юлташ.—Халăхи вăхăтра кашни ĕне валли уйрăм рацион тума тытăнтăм. Рацион тăрăх тăрантарни вылăх апатне перекетлеме пулăшать. Хальхи вăхăтра вылăх апатне перекетлĕн тытканлани питех те кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Иванов агроном тепĕр чухне зоотехник вырăнĕнче те ĕçлет.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпах колхоз государство умĕнчи обязательствăсене срокпех тултарассишĕн кĕрешнĕ. Чи малтан тĕштырă культуписене, укçа-тенкĕ парăмĕсене, пахча-çимĕç продукчĕсене парса татнă. Паянхи куна илсен, Водопьянов ячĕпе тăракан колхозăн тата колхозниксен государство умĕнче нимĕнле парăм та çук.

Пĕтĕм халăх çĕршыв оборонин фондне тума тытăннă вăхăтра колхозниксем çак ĕçе хăпăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Çулпуç калланă сăмахсем кашни çыннăн чунхавалне çĕклентерчĕç. Сталин юлташ чĕнсе каланине колхозниксем ĕçпе ответлеççĕ. Çак кунсенче колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 49 тир, 26 мăшăр пирĕтала тата алшăшсемпе чăлхасем, мулаххайсем, алшăллисем хатĕрлесе пачĕç.

Хальхи вăхăтра колхозниксен патриотизмĕ татах та ӳссе пырать. И. Гаврилов колхозник оборонăн заскавлă заказĕсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте кулленхи нормăна икшер те виçшер хут ирттерсе тултарать. Пĕр Гаврилов колхозник кăна мар, ыттисем те ывăнма пĕлмесĕр тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ.

Урама каçхи тĕттĕм сăн ӳкрĕ. Итем çинчи молотилкăн шавĕ лăпланчĕ.

Правление хĕрарăмсен ушкăнĕ пырса кĕчĕ. Вĕсем ĕçрен тӳрех, килĕсене каймасăр, правление пычĕç. Çавăнтах бригадирсем те пухăнчĕç. Хылчăклă тумтирĕсене силлесе, Максимов бригадир сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ те пĕр кунхи ĕçĕн итогĕсене тума пуçларĕ. Иванов агроном çĕнĕ хаçатсенчи хыпарсене вуласа парать. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, хаçатсем çинче пичетленекен боевой эпизодсене колхозниксем пĕр сăмах сиктермесĕр тимлĕн итлеме тăрăшаççĕ.

Геройла Хĕрлĕ Çар тунă кашни çĕнтерӳ вĕсене хаваслантарать, хаяр çапăçу хирĕнче çак колхоз çамрăкĕсем те, нумай нацийĕ халăхпа пĕрле, пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Вĕсен хисеплĕ те мухтавлă ячĕсене колхоз ĕмĕр-ĕмĕр асăнĕ, вĕсемпе мухтанĕ.

Н. ЮМАНГАЙ.

Агитаторсен ĕçĕ колхозсене пулăшать

СОВЕТСКОЕ. Районри вулав çурчĕсенчен чылайăшĕ аван ĕçлеççĕ. Тискер фашистсене часрах çĕнтерес тесен, кашни колхозникăн колхоз ĕçĕсене васкавлăн та тĕплĕн туса пыма кирли çинчен ăнлантараççĕ.

Уйрăмах Мăн Пакăшри вулав çурчĕ вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлет. Вулав çурчĕ çумĕнче çирĕп агитколлектив пур. Коллективри агитаторсем (А. Мокеев, М. Алексеева, Афанасьева, М. Краснов—вулав çурчĕн пуçлăхĕ) колхозниксене партипе правительство кăларнă постановленисене тата Совет Информаци Бюровăн пĕлтерĕвĕсене вуласа лайăх ăнлантарса параççĕ. Халĕ Сталин юлташ докладĕпе кашни колхозника паллаштарас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Агитаторсем хăйсен ĕçĕсене тăрăшса туса пыни колхоза пысăк çитĕнӳсем тума май парать. Колхозниксем государство умĕнчи парăмсене вăхăтра татаççĕ, колхоз пурнăçне вăйлатассишĕн пикенсе ĕçлеççĕ. Пакăш ялсоветĕнчи колхозсем çак вăхăта ĕнтĕ кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлесе çитерчĕç.

В. АНДРЕЕВ.

Уйхир ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем вĕçленсех пыраççĕ. Икĕ колхозăр пуçне ыттисем пурте кĕлтесене турттарса, капана хывса çитерчĕç. Пур колхозсенче те хĕрсе авăн çапаççĕ. Авăн çалнă çĕрте машинно-тракторнăй станцин молотилкисемпе, лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăсемпе туллин усă кураççĕ тата тăпачăпа та çапаççĕ. Колхозсем техникăллă культурăсемпе пăрçа йышши культурăсене çапса пĕтерчĕç. «Труженик», «Новая жизнь» колхозсенче пур культурăсене те çапса пĕтернĕ. «Коминтерн», «Мотор», «Прогресс», «Красные Четаи» тата ытти колхозсенчи уйрăм бригадăсем ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлерĕç.

Колхозниксем декабрĕн 10-мĕш тĕлне авăн çапса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ. Авăн çапнине пĕр вăхăтрах чылай колхозсенче обществăллă фондсем тума тытăннă.

«Марксист» тата «Труженик» колхозсем вăрлăх фончĕсене туса çитерчĕç.

Авăн çапса пĕтернĕ, государство умĕнчи обязательствăсене тултарнă тата фондсене туса çитернĕ хыççăн, колхозсем тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене валеççе пама тытăнаççĕ. Çак ĕçе колхозсем малтанах тĕплĕн хатĕрленсе пыраççĕ. Халĕ колхозсенче шут ĕçĕнче ĕçлекен работниксем кашни колхозникăн, бригадăн тата звенон ĕç итогĕсене тăваççĕ.

Çак иртнĕ кунсенче районри мĕнпур колхозсенче тырпула тата колхозниксен ĕçĕсене учета мĕнле илсе пынине тĕрĕслесе тухнă. Тĕрĕслӳ çакна кăтартса пачĕ: тырпул тухăçлăхне кашни бригада тăрăх, техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсенче—звеносем тăрăх шута илсе пыраççĕ. Çакăн пек туни вара колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелли закона тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма май парать.

Кăçал тырпул тухăçлăхĕн планлă заданийĕсене нумай бригадăсемпе звеносем ирттерсе тултарчĕç. «Свет» колхозри виççĕмĕш бригадăри иккĕмĕш звено кашни гектартан планпа пăхнинчен 11-шер центнер ытларах пăрçа туса илнĕ. «Красные Четаи» колхозри виççĕмĕш бригада план тăрăх гектартан 12 центнер кĕрхи тулă туса илсе вырăнне 18 центнер туса илнĕ. «Коминтерн» тата «Пятилетка» колхозсенчи звеносене махорка тухăçлăхне планран ирттерсе ӳстернĕшĕн çĕнĕ закон тăрăх ухçан хушса тӳлеççĕ.

Тырпула учета илнипе пĕрлех хальхи вăхăтра колхозсенче колхозниксен ĕçĕсене те шута илеççĕ. «Красное Сормово», «Путь к социализму» тата Энгельс ячĕпе тăракан колхозсенче учет ĕçне уйрăмах лайăх организацилеççĕ. Çак колхозсенче кашни колхозник çулталăк пуçланнăранпа мĕнле ĕçкунĕ тунине аван пĕлсе тăрать, ĕçкунĕсене кăтартса паракан списоксене курăнмалли вырăнсене сакăн.

Г. ИВАНОВ.
Райçăрĕç **пайĕн главнăй агрономĕ.**

Партизанла кĕрешӳ тапхăрĕсем

Пирĕн çулпуç аслă Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче çак çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладĕнче, партизансен движенийĕ çинчен асăнса, çапла каларĕ: «...немĕç çарĕ, пирĕн çĕршывăн ăшнелле кĕрсе кайса, хăйĕн тылĕнчен уйăрăлса пырать, унăн ирĕксĕрех ют çĕрте вăрçма тивет, ютçĕршывра çĕнĕ тыл тума тивет, **çав вăхăтрах вăл тыла пирĕн партизансем аркатса тăраççĕ, çакă вăл немĕç çарне хатĕрсемпе çимĕçсем парса тăрас ĕçе тĕпренех йĕркерен кăларса пырать, ăна хăйĕн тылĕнчен хăратса тăрать, хăйĕн положенийĕ çине шанса тăрассине пĕтерет», терĕ.**

Вăрçă вăхăтĕнче тăшман тылĕнче партизанла движени çĕкленнине Сталин юлташ пит те пысăк вырăна хурса каклать.

Пирĕн çĕршыври партизанла движенин хăйĕн пуян историйĕ пур. Совет Союзĕнче пурăнакан вырăс, украинец, белорусс халăхĕсем тата ыт. те хăйсен çĕрне тытса илме тăнă ютçĕршыв çыннисене хирĕç нумай ĕмĕрсем тăршшĕ яланах хаярран кĕрешнĕ. Тăван çĕршыва тапăнса кĕнĕ тăшмана çĕмĕрсе тăкма çĕкленнĕ партизансем тăшманăн яланах хăрушă пулнă, вĕсем хăйсен хăюллăх кĕрешĕвĕпе тăшмана хирĕç çапăçакан регулярнăй çарсене нумай пулăшу панă.

Вырăс государствин историйĕ тăрăх итлаттăн аваллăха каймасăр, чи малтан 1611—1612 çулсем çинче чăрăнса тăрăпăр. Çак çулсенче поляк улпучĕсем, вырăс çĕрне хăйсене пăхăнтарма шутланипе, çар пуçса Мускава килсе кĕнĕ. Ютçĕршыв çыннисем Мускава тытса илни пĕтĕм вырăс халăхне тарăхтарса янă. Унта та хунта халăх ополченецĕсем ушкăнланма пуçланă. Вĕсем хăйсен ирĕкĕпех, алла хĕçпăллă тытса, Мускава тăшманран хăтăлма сухатусем тӳснĕ. Россия çĕрне килсе кĕнĕ 60 пин çынлă Карл войскинчен Полтава патне 27 пин çын çеç çитме пултарнă, кӳсем те ывăнса çитнĕ, камăлĕсем ӳкнĕ салтаксем çеç пулнă. Çапла вара тăшмана хирĕç халăх хăй те кĕрешнĕ вырăс çарне Полтава патĕнчи чаплă çĕнтерĕве тума май панă. Çав вăхăтчен шведсен çарне никам та çĕнтерейми çар тесе шутланă.

Партизанла кĕрешĕвĕн движенийĕ анлăн та вăйлăн сараласси уйрăмăнах 1812 çултан, Наполеона хирĕç пынă отечественнăй вăрçăран пуçланать. Пĕтĕм тĕнчене пăхăнтарма шутланă Наполеон 600 пин çынлă пысăк çарпала Мускава килсе кĕнĕ. Мăнкăмăллă тăшман Россинăна пăхăнтарма шутланине пĕтĕм вырăс халăхне хумхантарнă. Мĕнпур халăх ура çине тăнă, тăшмана хирĕç кĕрешĕве çĕкленнĕ.

Наполеон Мускава çитсе кĕричченех унăн тылĕнче хресченсен партизанла движенийĕ пуçланнă. Наполеон çарĕ çине партизанла тапăнма чи малтан белоруссемпе литовецсем хресченĕсем тытăннă.

Подполковник Денис Давыдов пуçарнипе 1812 çулти август пуçламĕшĕнче регулярнăй çар чаçĕнчен партизансен отрячĕ туса хунă. Çав вăхăтран тытăнса, партизансен отрячĕсем йышлансах пыраççĕ. Капитан Сеславин, Фигнер, Дорохов, Орлов-Денисов, казак Платов тата ытти çак партизансен отрячĕсене организацилеççĕ. Тăшман çарĕ йышăнса илнĕ районсенче пур çĕрте те хресченсен партизанла отрячĕсем ушкăнланаççĕ. Çар чаçĕсенчен тунă партизансен отрячĕсемпе хресченсенчен организациленнĕ партизансен ушкăнĕсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса ĕçлеме пуçлаççĕ. Вăрмансенче пытанса пурăнакан партизансем тăшманăн хĕçпăшал е ĕçме-çимелли продуктсем турттаракан обозĕсене тыта-тыта илнĕ, тăшман чаçĕсем хушшинчи çыхăнăва татнă, унăн разведчикĕсене вĕлере-вĕлере пĕтернĕ тата ытти те. Партизансем ĕçленине пула, Наполеон вырăссен çарĕнче мĕн пулса иртни çинчен нимĕн те пĕлме пултарайман.

Халăх хушшинчи партизансем пит те вăйлă пулнă, халăх вĕсене пур майпа та пулăшса тăнă: тăрантарнă, пытарса усранă тата ытти те. Пĕрехинче французсем Фигнер отрядне хупăрласа илнĕ. Виçĕ енчен французсем çавăрса илнĕ, тепĕр енче каçса тухмалла мар лачака пулнă. Фигнер отрячĕ пĕтме те пултарнă. Анчах та çак сехетре Фигнера хăтарма вырăнти хресченсем пырса çитнĕ. Вĕсем каçхине пĕренесем, хăмасем тата улăм йăтса шурлăх çине сарнă та вăхăтлăх кĕпер тунă. Çак кĕпер тăрăх партизансене шурлăх тепĕр енчи типĕ çĕре кăларнă. Партизансене каçарсанах хресченсем кĕпере нăсна. Тепĕр кунне французсем партизансене йĕрлесе пырса шурлăха кĕрсе кайнă, анчах та каçмалли пулман. Çак вăхăтра вĕсен çине шурлăх хĕрринче тăракан партизансем пăшалсенчен пенĕ. Тепĕр факт. Наполеон çарĕнче тăракан итальянецсен войскисене—виçĕ батальон войскăна—Малоярославец патне çитсен вырăнти хресченсем тытса чарнă, вĕсем кĕпере пăснă та итальянецсем шыв урлă каçайман. Çакна пула Наполеон çарĕн саперĕсем çĕнĕ кĕпер тума тытăннă, партизансем тăварахри арман пĕвине татса янă та тума пуçланă кĕпер йăлтах сохса кайнă. Итальянецсен батальонĕсен каллех тытăнса тăма лекнĕ. Çав вăхăтра унта вырăссен регулярнăй çар чаçĕ пырса çитнĕ те итальянецсене аркатса тăкнă.

1812 çулти партизансем хушшинче лайăх организациленнĕ пысăк отрядсем те пулнă. Тĕслĕхрен, Герасим Курин отрядĕнче 5000 çын ытла шутланнă. Ку отряд французсене хирĕç вăйлă çапăçусем те туса ирттернĕ.

1812 çулти отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи партизан-геройсем хушшинче Федор Онуфриевпа староста арăмĕ Василиса Кожихина ячĕсем палăраççĕ, вĕсен отрячĕсем темиçе çĕршер француза тыткăна илнĕ. Çаксемпе пĕрлех, ун чухнехи палăрăмлă партизансенчен Вадбольский, Фонвизин, полковник Кудашев ячĕсем вырăс халăхĕн историне кĕрсе юлнă. Вĕсен хушшинчен пуринчен те ытларах Д. Давыдов ячĕ палăрать.

Партизансем Наполеон войскисен уйрăм чаçĕсем хушшинчи сыхăнăва татса тăнă, çакăнпа пĕрлех французсен çар командованийĕн вăрттăн тума шутланă маневрĕсене те пĕлме пултарнă. Наполеон планĕ тăрăх, антраса çитнĕ французсен çарĕ Мускавран Калуга çулĕпе тухса каймалла пулнă. Сеславин отрячĕн партизанĕсем çак плана пĕлнĕ те ун çинчен вырăссен çар командованине систернĕ. Çар командованийĕ васкасах, Калуга çулĕ çине вăйлă çар ярса, французсен çулне пӳлнĕ, Французсен вара ирĕксĕрех хăйсем килсе кĕнĕ çулпа, ĕçме-çимеллисĕр, çаратса хăварнă вырăнпа, Смоленск урлă каймалла пулнă. Чакса тухакан Наполеон çарне хыçранах вырăссен регулярнăй çарĕ хăваласа пынă, айăкисенчен тата тылран та партизансен отрячĕсем пыра-пыра тапăннă. Çапла партизансем 1812 çулти отечественнăй вăрçăра тăшмана çĕнтерме пит те пысăк пулăшу панă.

1812 çулти отечественнăй вăрçăн геройĕ Денис Давыдов, хăй вăхăтĕнчи партизансен кĕрешĕвне хак хурса: «Россия халь хăйĕн пĕтĕм улăпла кĕлеткипех çĕкленеймерĕ-ха. Вăл хăçан та пулсан пĕтĕмпех çĕкленсен, унăн тăшманĕсене хуйхă тивĕ»—тесе çырнă.

Д. Давыдов каласа хăварнă сăмах пророк сăмахĕсем пек тĕрĕс пулнине асăлă вырăс халăхĕ 1918—1920 çулсенчи граждан вăрçи вăхăтĕнче кăтартрĕ. Çавнах куратпăр эпир хальхи тискер фашизма хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăра та.

П. ГРИГОРЬЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те сапăçнă.

Хĕвеланăç фрончĕн чылай участокĕсенче пирĕн чăсем, противникăн хаяр атакисене сире-сире ярса тата хăйсем контратакăсем туса, нимĕçсен войскисене техника тĕлĕшпе те, сынсем тĕлĕшпе те пысăк сиен кӳнĕ тата малалла куçнă.

Декабрĕн 6-мĕшĕнче нимĕçсен 31 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 7 самолет пĕтнĕ.

Декабрĕн 7-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 5 самолетне персе антарнă.

* * *

Пирĕн авиаци декабрĕн 6-мĕшĕнче нимĕçсен 115 танкне, темиçе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 750 автомашинине ытла, 50 полевой тата зенитнăй орудийĕсене, боеприпассемпе тиенĕ 150 лавне ытла, 40 мотоциклне ытла пĕтерсе тăкнă, çунтарса янă, тăшманăн пехотине 4 ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, сапаласа янă.

* * *

Фронтăн Сталиногорск енчи участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Осликовский полкăшăн гвардейски чăсĕ темиçе кун хушши вăйлăн çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан 20 пунктран нимĕçсене хĕссе кăларнă, çав çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене пин çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Боецсем нимĕçсен 2 танкне, артиллерипе минометсен 4 батарейине пĕтерсе тăкнă, трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Квашук красноармеецăпа 8 нимĕç хупăрласа илнĕ пулнă. Хăюллă та шиксĕр боец пулемет-пистолетран тăлперсе 1 офицера тата 6 фашиста вĕлернĕ, сиччĕмĕшне Квашук юлташ прикладпа сапса ӳкернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче совет партизанĕсем ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Д. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ противникăн чугунçул коммуникацийĕсене аркатать, çапла тунипе фашистсен войскисене, боеприпассемпе продовольствине фронт линийĕ патне куçарассине чарса тăрать. Кĕске вăхăт хушшинчех отряд противникăн 8 поездне крушени тунă. Нумаях пулмасть партизансем пĕр склада çунтарса янă, çав складра нимĕçсем колхозниксенчен туртса илнĕ 600 михĕ тырра усранă пулнă. М. тата Т. юлташсем ертсе пыракан партизансен отрячĕсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна вĕлерсе пĕтернĕ тата тăшманăн 15 грузовой машинине, 2 танкне пĕтерсе тăкнă. М. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ 3 уйăх хушши çапăçса нимĕçсен 16 офицерне, 176 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ, боеприпассемпе продовольстви турттарса пыракан 31 автомашинине, штабăн пĕр автобусне тата 24 мотоциклне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Вилнĕ тата тытăкăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем çумĕнче тупнă çырусем, вĕсен килĕсенчен янăскерсем, Германирен шиклĕх ӳссе пынине çирĕплетсе параççĕ. Вилли Лумм патне Лейпцигран çапла çырса пĕлтереççĕ: «Пире хĕле кĕрииччен вăрçă пĕтет тесе шантаратчĕç, анчах та çав юлашки шанăç та пĕтрĕ. Хĕле те кĕтĕмĕр, анчах та вăрçăн вĕçĕ те курăнмасть. Çавă питĕ чуна ыратать. Çынсем пуçĕсене чиксе çӳреçĕ. Фрау Окпендорф хулянсах вилет. Таçта Петроград патĕнче унăн упăшкин урисене тăм илнĕ. Российăра тăм илнĕ салтаксене тиенĕ поездсем кашни кунах килсе тăрасçĕ, тесе калаççĕ. Аманнисенчен хăйсен тăванĕсем çинчен мĕн те пулин ыйтса пĕлес тесе, хĕрарăмсем кашни кунах вокзала пухăнса тăрасçĕ. Анчах та полици вĕсене сывăха ямасть, хăвала-хăвала ярать. Эсĕ те шăнатăн пулĕ?!»

Лейтенант Вальф Герц патне унăн амăшĕ çапла çырать: «Пирĕн патра юлашки вăхăтра питĕ лăпкă мар хыпарсем çӳреççĕ. Шкулта пĕрле вĕреннĕ санăн икĕ юлташу вилни çинчен хаçатра пичетленĕ икĕ пĕлтерĕве яратăп. Вĕсен ашшĕ-амăшĕсем питĕ кулянаççĕ, иккĕшĕн те вĕсен пĕртен-пĕр ывăлĕсем пулнă-çке-ха. Пурте: вырăссене хирĕç тĕп кĕрешӳ малашне пулмалла теççĕ, мĕншĕн тесен вырăссем нимĕнрен те хăрамаççĕ тата çĕнтерӳ тăвассишĕн темĕн пама та хатĕр, тесе çирĕплетсе калаççĕ».

Адольф Клембикер ефрейторăн арăмĕ Штеттинран упăшкине çапла çырса пĕлтерет: «Эсĕ пĕлес тесе ыйтса янă çынсем халĕ кунта мар, хăшĕ—фронтра, хăшĕ тĕрлĕрен çĕршывсемпе тĕрлĕрен хуласенчи казармăсенче. Эмиль Бюллер пек уксахскерсем те мĕн тума та пулин кирлĕ пулнă пулас. Пĕр уйăх каялла вĕсене илсе тухса кайрĕç. Хулара арçынсем пачах та курăнмаççĕ».

* * *

Берген хули (Норвегия) сывăхĕнче нимĕçсен боеприпассем усракан склачĕ взрыв пулнипе сирпĕнсе кайнă. Взрыв пулнипе нимĕçсен 15 салтакĕ тата 2 офицерĕ вилнĕ. Ку ĕнтĕ юлашки уйăх хушшинче Норвегири патриотсем взрыв туса сирпĕнтерсе янă виççĕмĕш склад.

Декабрĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те сапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен Голубев юлташăн чăсĕ, противника хирĕç хаярран çапăçса, нимĕçсенчен 8 танк, 4 оруди, 4 миномет, темиçе автомашина тытса илнĕ тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Говоров юлташăн боецĕсем виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенчен 17 танк, 17 оруди, 20 миномет тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Филиппов юлташăн боецĕсем кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противникăн икĕ хаяр атакине сирсе пăрахнă тата тăшманăн 7 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Медицина сестри Вера Масютина çапăçу хирĕнчен аманнă 35 боеца, вĕсен хĕçпăшалĕсемпе пĕрлех, йăтса тухнă.

* * *

Вилнĕ тата тытăкăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем çумĕнче тупнă çырусем, тăванĕсемпе палланă çынсенчен патĕнчен килнĕскерсем, Германире продовольстви тĕлĕшĕнчен лару-тăру малалла япăхса пыни çинчен каласçĕ. Пауль Сайферт салтак патне арăмĕ çапла çырать: «Карточкăсем халĕ ĕнтĕ продовольстви вырăнне çӳрекен япаласем пулса тăчĕç. Çăкăрпа çусем тата пахча-çимĕçсем вырăнне эпир тĕрлĕрен карточкăсем питех те нумай илеттĕр. Çав карточкăсене пире питĕ йĕркеллĕн парса тăраççĕ, анчах вĕсемпе нимĕн те илме çук. Юлашки 4 кун хушшинче эпĕ пĕр тĕпренчĕк çăкăр та илеймерĕм, черетсенче 50 сехете яхăн тăрса иртертĕм. Çакăн пек йывăрлăх хăçан та пулин пĕтĕ-ши? Пире тата пирĕн ачасене выçлăхпа татах та нумайччен асаплантарĕç-ши?». Адольф Бюргер салтак та хăйĕн амăшĕнчен çавнашкал çырăвах илнĕ. Амăшĕ ывăлĕ патне çапла çырать: «Эпир нихăçанхи пек те мар выçă аптăратпăр. Апат-симĕçсем пачах пĕтсе çитрĕç. Вĕсене темĕн пек уçса нумай пулсан та тупса илме çук».

* * *

Горький облаçĕнчи ĕçсыннисем хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр ĕçлесе фронта мĕн кирлине пурне те туса парас ĕçе кунран-кун вăйлатса пыраççĕ. Молотов ячĕпе тăракан заводра 60 бригада ытла плана 200-шер е ытларах процент тултарса пыраççĕ. Заводри стахановец Шубин юлташ кашни сменăра 9—10-шар норма тултарса пырать. Ленин ячĕпе тăракан заводра пĕрремĕш номерлĕ цехри Гаврюшина юлташăн бригади питех те кирлĕ пĕр задăние, планпа палăртнă пек виçĕ талăкра пурнăçа кĕртес вырăнне, пĕр талăкра пурнăçа кĕртнĕ. Горький-Сортировочная депори машинист Призов юлташ хăйĕн бригадипе грузсем тиемелли нормăран иртнĕ 300 тонна ытла тиенĕ поезда тивĕçлĕ çĕре илсе çитернĕ. Штанге ячĕпе тăракан артельри (Павлов хули) стахановецсем Неудачин, Власов, Сорокин тата Найденов юлташсем, кунсерен мирлĕ вăхăтра 30 çын панă чухлĕ продукци калăрса, фронт валли парса тăраççĕ. Горький облаçĕнчи колхоз хресчĕнĕсем те пысăк ăнăçлăхпа ĕçлеççĕ. 1941 çулта облаçри колхозсенче майракалла шултра выльăх-чĕрлĕхсен йышĕ—16,1 процент, сыснасен шучĕ—39,6 процент, сурăхсен шучĕ—34,7 процент ӳснĕ. Облаçри рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци ССР Союзĕн оборона фондне 200 миллион тенкĕ ытла укçан хывнă тата Хĕрлĕ Çар валли тĕрлĕрен ăшă япаласем çур миллион япала панă. Пыщугски районри колхозниксем тăван çĕршыв обороннин фондне кашни уйăхрах пĕр кунлăх ĕç укçине парса тăраççĕ. Кунсăр пуçне, вĕсем оборона фондне выльăх-чĕрлĕх 100 пуç, 100 центнер тĕттирă тата 57.000 тенкĕ укçа панă.

ЯПОНИПЕ АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕМ ХУШШИНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЯПОНЕЦСЕМ ГАВАЙ УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ СЫВЛĂШРАН ПЫРСА ТАПАННИ ÇИНЧЕН ШУРĂ ÇУРТ ПĔЛТЕРНИ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Шурă Çурт çапла пĕлтерет: Япони самолечĕсем Харбор (Гавай утравĕсем) çине тата Гуам утравĕ çинчи çарпа тинĕс-çар сооруженийĕсем çине вĕçсе пырса атакăланă, унта Америкăн сывлăш-çар вăйĕсен тĕп бази вырнаçса тăрать.

ЯПОНИ САМОЛЕЧĔСЕМ МАНИЛА ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫНИ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Японин самолечĕсем Нью-Йоркри вăхăтпа 15 сехет те 20 минутăра Манилăри (Филиппины) çарпа тинĕс-çар базисем çине вĕçсе пырса атакăланă.

ГОНОЛУЛУ ПАТĔНЧЕ ТИНĔСРИ ВĂРÇА ПЫРАТЬ

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Гонолулуран инçех мар тинĕс çинче çапăçу пырать. Пирл Харбор гаванĕнчи укрепленисене хирĕç противникăн пĕр авианосецĕ çапăçать.

ГАВАЙ УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ ТАПАННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Гавай утравĕсем çине Японин 150 самолечĕ вĕçсе пынă. Малтанлăха пĕлтернисем тăрăх, бомбăсене Хикхэмри аэродром çине (Оаху утравĕнчи авиаци чăçĕсен паркĕ), çавăн пекех тата Пирл Харбор çине пăрахнă. Унта бомбе пăрахнине пула пушар тухнă. Американ зенитнăй артиллерийĕ самолетсем çине персе тăнă, тата Американ чылай çар самолечĕсем сывлăша çĕкленнĕ. Шурă Çурт пĕлтернĕ тăрăх, Гавай утравĕсене тата Манилăна японецсем атакăласси малалла пырать.

* * *

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран çапла пĕлтерет: Америка çарĕн представителĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Гонолулу районĕнче Японин 2 самолетне персе ӳкернĕ. Гонолулу хулинче нумай çĕрте пушарсем тухнă, анчах вĕсене çийĕнчех сӳнтерсе лартнă. Губернатор оборона тĕлĕшпе халех чрезвычайнăй мерăсем йышăнасси çинчен пĕлтернĕ. Хулара вилнисем хушшинче икĕ японец пур.

Нэйшенэл Бродкастинг Компани ятлă радиокомпанин корреспонденчĕ Гонолулуран пĕлтерни çине кăтартса, Рейтер агентстви Нью-Йоркран çапла пĕлтерет: Хикхэмри аэродром çине бомба тӳрех ӳкнине пула 350 çын вилнĕ. Корреспондент çавăн пекех тата Пирл Харбор гаванĕнче Америка карапĕ çине тапăнни çинчен пĕлтерет.

Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельтăн секретарĕ Эрли: Гонолулу çыранĕсем патĕнче тинĕсри çапăçусем пулни çинчен пĕлтернине çирĕплетсе пама пултараймастăп, тесе калать.

ГУАМ ÇИНЕ ТАПАННИ ÇИНЧЕН ШУРĂ ÇУРТ ПĔЛТЕРНИ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Шурă Çурт Гуам утравĕ çине тапăнни çинчен пĕлтернĕ.

АМЕРИКА ФЛОЧĔ ПИРЛ ХАРБОРТАН ТУХСА КАЙНĂ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Гонолулуран пĕлтернĕ тăрăх, Америка флочĕ Пирл Харбортан тухса кайнă.

ПАНАМА КАНАЛĔН ЗОНИНЕ ТĔТТĔМЛЕТНИ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС) Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Панама каналĕн зонинче тĕттĕмлетес йĕркене ĕçе кĕртнĕ.

АМЕРИКАН ÇАР ТРАНСПОРЧĔ ÇИНЕ ТОРПЕДА ЯНĂ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Шурă Çурт пĕлтернĕ тăрăх, Американ вăрман тиенĕ çар транспорчĕ çине Сан Францискоран хĕвеланăç енче 1300 мильăра торпеда янă.

РУЗВЕЛЬТ РАСПОРЯЖЕНИЙĔ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Çарсене тата тинĕс-çар флотне Рузвельт приказ панă, çав приказ тăрăх Пĕрлешӳллĕ Штатсене хӳтĕлес тĕлĕшпе малтан хатĕрленĕ пур приказсене те пурнăçа кĕртме хушнă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕНЧИ МОБИЛИЗАЦИ

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Американ Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕçпăшаллă вăйĕсен мĕнпур личăй составне мобилизацилесси çинчен çар министерстви приказ каларнă.

ЯПОНИ АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕНЕ ТАТА АНГЛИЕ ХИРĔÇ ВĂРÇА ПУÇЛАНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ТОКИО, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви çапла пĕлтерет: император ставки 6 сехетре Япони çарĕпе флочĕ паянхи шурăмпуç килнĕ вăхăтран пуçласа Американ Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англин Лăпкă океанăн хĕвеланăç пайĕнчи вăйĕсене хирĕç вăрçăллă лару-тăрура пулни çинчен пĕлтернĕ.

АНГЛИПЕ ЯПОНИН ТИНĔСРИ СУХАТАВĔСЕМ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Япони самолечĕсем Сингапура вĕçсе пырса икĕ крейсера шыва путарнă. Çав агентствах Нью-Йоркран: Гонолулу çыранĕсем патĕнче Японин авианосецне путарнă, тесе пĕлтерет. Çак икĕ пĕлтерĕве те халлĕхе официальнăй йĕркепе çирĕплетсе паман-ха.

ЯПОНЕЦСЕМ ШАНХАЙРИ СЕТТЛЬМЕНТĂН ÇЫРАН ХĔРРИНЧИ ПАЙНЕ ОККУПАЦИЛЕНĔ.

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Шанхайри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, японецсем Шанхайри сеттльментăн çыран хĕрринчи пайне оккупацилене.

ШАНХАЙРА АНГЛИН КАНОНЕРКИНЕ ПУТАРНĂ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Шанхайри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, японецсем Шанхайра Англин канонеркине путарнă.

ПАНАМĂРИ ЯПОНЕЦСЕНЕ ВЛАÇСЕМ АРЕСТЛЕНĔ

ТОКИО, декабрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бостонри радиостанци Пирл Харборта икĕ танкера путарни çинчен пĕлтерет. Радиостанци пĕлтерĕвĕнче малалла: Панамăри японецсене влаçсем арестленĕ, тесе кăтартса панă.

Англия Финляндиа, Венгрие тата Румыние хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ

Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: декабрĕн 5-мĕшĕнче, çурçĕр ситеспе, Англи правительстви Финлянди правительствине панă хăйĕн ультиматумĕ çине ответ илнĕ. Англи правительстви хăйĕн çав ультиматумĕнче Финлянди çакăн çинчен асăрхаттарнă: Финляндия Россия çине тапăнма чарăнмасассăн, Англия Финлянди хăйĕн противникĕ тесе шутлать,—тенĕ. Ультиматумăн срокĕ декабрĕн 5-мĕшĕнче çĕрле 12 сехетре иртнĕ.

Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Финляндин ответĕ пачах та çителĕксĕр тата çав ответ Англи нотинче кăтартса панă условисене Финлянди правительстви пурнăçа кĕртме шутламаннине уçăнах кăтартса парать.

Венгрипе Румыни правительствисенчен илнĕ ответсем те çавнашкалах çителĕксĕр пулнă. Декабрĕн 6-мĕшĕнче 00 сехет те 01 минутăран пуçласа Англия Финляндипе, Румыние тата Венгрие хирĕç хăй вăрçă пуçлани çинчен Лондонра официально йĕркепе пĕлтернĕ

Канада Финляндие, Румыние тата Венгрие хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ

Лондонра Англия Финляндие, Румыние тата Венгрие хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ хыççăн Канада та çак çĕршывсене хирĕç вăрçă пуçланă. Финляндие, Румыние тата Венгрие хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтерсе, Канада правительствин премьерĕ Маккензи Австрали, Çĕнĕ Зеланди тата Кăнтăр-Африка Союзĕн правительствисем те çавăн пек деклараци тăваççĕ, тесе кăтартса панă. (ТАСС).

Канада Финляндие, Венгрие тата Румыние хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Оттаваран пĕлтернĕ тăрăх, Канадăн премьер-министрĕ Маккензи Кинг Канада Финляндие, Венгрие тата Румыние хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ.

Çĕнĕ Зеланди Финляндие, Венгрие тата Румыние хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Веллиттонран пĕлтернĕ тăрăх, Çĕнĕ Зеландин премьер-министрĕ Фрезер декабрĕн 7-мĕшĕнче Çĕнĕ Зеланди Финляндие, Венгрие тата Румыние хирĕç вăрçă пуçлани çинчен пĕлтернĕ.

Югославире партизансен кĕрешĕвĕ вăйлăн сарăлнă

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат Югославире партизансен кĕрешĕвĕ анлăн сарăлса кайни çинчен пĕлтерет. «Белградпа Албани хушшинчи сăртсем çинче пыракан çапăçусене партизансен вăрçи теме çук,—тесе çырать çак хаçат.—Кунта чăн-чăн çар чăçĕсен соединенийĕсем çапăçаççĕ. Гитлер Югославие сакăр уйăх таран оккупацилесе тăрса та çав çар отрячĕсене пăхăнтарма пултараймарĕ. Халĕ ĕнтĕ Гитлерăн ку вырăна нимĕçсемпе итальянецсен темиçе дивизине танксемпе тата самолетсемпех яма лекрĕ, çакă ĕнтĕ Югослави çарĕсен вăйĕ çирĕппине кăтартать. Хĕвелтухăçĕнче юнлă вăрçă пынă вăхăтра тата çав вăрçа мĕскер яма май пур çавсене пурне те ярса тăнă хушăра, Гитлер Югославие Германи çарĕсен чăсĕсене ямĕччĕ, пысăк çăлтав пулмасан, Югослави партизанĕсене Итали войскисем хăйсемех пусарĕç, тесе шутланă пулĕччĕ. Паллах, Югославире оккупацилле пысăк çар составĕ тытни Гитлер хăйĕн союзникне—Италие шанманнине пĕлтерет. Югослави партизанĕсене ертсе пыракан Михайлович генерал фашизм чуралантарнă Европăри халăхсен вăйĕ парăнми çирĕп тăнине кăтартса парать».

Хĕвелтухăç фронтĕнчи вăрçă çинчен ютçĕршыв хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

СТАМБУЛ, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Турцири хаçатсем Ростова нимĕç захватчикĕсенчен хăтарни çинчен халĕ те çыраççĕ. Турцири паллă журналист «Батыр» хаçатра çапла çырать: çак событи питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен çакă вăл вырăссем хирĕç тăрассине нимĕçсем çапса хуçнă тесе каланин суйине тăрă шыв çине кăларать. Вырăссем хирĕç тăрассине чăнах та çапса хуçнă пулсан, тесе çырать автор, Германи çарĕ Мускав çывăхĕнче тапăртатса тăман пулĕччĕ тата Ростовран та тухса кайман пулĕччĕ.

Ялчин журналист «Ени сабах» хаçатра пысăк статья пичетлесе кăларнă. Вăл çапла çырать: «Вырăссем Ростова каялла туртса илчĕç. Темиçе кун каярах çеç нимĕçсем, сăмах майĕпе каласан, питĕ пысăк çухатусем туса тата вăй пĕтерсе, Ростова тытса илни çинчен палăртсаччĕç. Нимĕçсем çак хулана тытса илнишĕн мĕнтери савăннине шута илсен, ăна вырăссем каялла туртса илни вĕсеммĕн питĕ кӳренмелле япала пулса тăрать. Ростов çывăхĕнче событисем вăрçă пуçланни 23 эрне тултарнипе пĕр вăхăтталла пулса иртрĕç. Икĕ уйăх каярах Гитлер вырăссене пĕтерсе тăхмалли юлашки наступлени пуçланса кайрĕ, тесе каннайса пĕлтерни халь те асран каймасть-ха. Хальхи положение шута илсен, нимĕçсен фюрер ку расра та йăнăш тунă тесе йышăнассисĕр пуçне урăх нимĕн те юлмарĕ. Çакă ĕнтĕ нимĕçсем тăвакан пĕрремĕш йăнăш çеç мар, тесе палăртать автор. Малтанах нимĕçсем вăрçă питĕ кĕске вăхăта пырать, тесе пĕлтерчĕç. Малтанхи çĕнтерӳсене радио тăрăх барабансем çапса чаплăн пĕлтерсе тăчĕç. Кун хыççăн нимĕçсем вырăссен çарне çавăрса илсе пĕтерсе тăкни çинчен, темĕн чухлĕ трофея тытса илни çинчен хыпар сарчĕç. Юлашкинчен, вырăссене татăклăн пĕтерсе тăкмалла çапса аркатни çинчен пĕлтерӳ пачĕç. Акă, çакнашкал пĕлтерӳсем хыççăн, Мускав ниепле те парăнманнишĕн ахаль те кӳреннĕ халăх умĕнче Ростован нимĕç çарĕсем хăйсен ирĕкĕпе тухса кайман, вĕсене унтан вырăссен хĕçпăшаллă вăйĕсем хăваласа кăларса янă, тесе йышăнма тивет. Вырăссен çарне пĕтерсе тăкни çинчен пур калаçусем те пĕтĕмпех пропагандăн продукчĕ пулса тăрать. Вырăссем хăйсен тăван сĕршывне хӳтĕлеççĕ, мĕн вăрçă пуçланнăранпах вĕсем иксĕлми паттăрлăхпа çапăçаççĕ. Германи çарĕнче ывăнни, вăй-хăват пĕтсе пыни палăрать. Нимĕçсем Ростов патĕнче поражени тӳснин пĕлтерĕшĕ вăл—Германие никам та çĕнтерме пултараймасть текен халлап тăрă шыв çине тухни пулать. Çакна халĕ ĕнтĕ вырăссем çеç мар, пĕтĕм тĕнче курса ĕненчĕ.

«Ватан» хаçат çапла çырать: «Ростова тытса илни çак вăрçă пуçланнăранпа вырăссем тунă чи паттăр ĕç пулса тăрать. Мускав çывăхĕнче вырăссем хирĕç тăраççĕ çеç те мар, вĕсем инициативăна хăйсен аллине илеççĕ, контратакăсем тăваççĕ».

Турцире тухса тăракан «Журналь де Реан» çапла çырать: вырăссем Ростова каялла илни питех те пысăк вĕрăн йышăнса тăрать. Европăра вăрçă пуçланнăранпа нимĕçсен кунта ирĕкĕрех пĕрремĕш хут каялла чакма тивет. Вырăссем, нимĕçсене çавтери вăйлăн пырса çапса, 50 километр каялла хăваласа янă. Нимĕçсем кĕркунеччен Кавказа тытса илме ĕмĕтленнĕ, анчах та вырăссем вĕсене Кавказа каймалли çул çинче ăнран ямаллах пырса çапрĕç. Хĕрлĕ Çар пырса çапнипе антăраса ӳкнĕ нимĕçсем хăйсем кăларакан коммюникесенче пĕр вĕçне тепĕр вĕçĕпе те сыхăнтараймаççĕ, тесе палăртать хаçат. Малтанах вĕсем хăйсене Ростовран хулари халăх хăваласа кăларса янă тесе пĕлтерчĕç, анчах та юлашки вăхăтра кăларнă коммюникесенче вĕсем, кăнтăрти фронтра вырăссен пысăк вăйĕсем Германин çарĕсене штурмлаççĕ, тесе йышăнаççĕ.

«Тан» хаçат çапла çырать: нимĕçсем каялла чакса Ростовран тухса кайни Германи çарĕн тивĕçлĕхне çапса хуçрĕ, çакă вăл нимĕç халăхĕ хушшинче вăрçăн результачĕсем пирки иккĕлентерекен шухăша вăйлатма пултарать.

Китаецсемпе пĕрле Япони хирĕç кĕрешме хатĕрленеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Манилăран çапла пĕлтерет: халĕ илнĕ сведенисем тăрăх, Американ сывлăш-çар вăйĕсенчен тăракан американецсем 500 çын Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи районсенчен пĕрине пырса çитнĕ, вĕсем унта китаецсемпе пĕрле Япони хирĕç кĕрешме хатĕрленеççĕ. Çирĕпленмен сведенисем тăрăх, англичансем темиçе летчикĕ Англин сывлăш-çар флотĕнчен Китай авиацине ирĕклĕн кĕме кайнă. Юлашкинчен корреспондент, Китай летчикĕсен группа хальхи вăхăтра Американ Пĕрлешӳллĕ Штатсенче вĕренет, тесе кăтартса парать.

Ливи фронтĕнчи ĕçсем

ЛОНДОН, декабрĕн 6-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ декабрĕн 6-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: юлашки 24 сехет хушшинче Англи войскисем вăрçă пыракан районсенче пиринче те тăшман çарĕсене вăйлăн хĕснĕ. Эль-Дуда участокĕнче англичансен пехоти, каçхи операцисем туса, тăшмана вăл декабрĕн 4-мĕшĕнче йышăннă позицисенчен каллех хĕссе кăларнă.

Бардирен хĕвеланăç еннелле Англи çарĕсен моторизованнăй колонни, тăшманăн отрядне хирĕç çапăçса, 60 автомашина тата çĕр çын тыткăна илнĕ. Тĕп фронтăн тепĕр çĕрти çапăçăвĕнче Англин мотомеханизированнăй войскисем тăшманăн 5 танкне пĕтерсе тăкнă. Ливипе Египет чикки районĕнче Кăнтăр Африка çарĕсем тăшманăн Соллумран кăнтăр-хĕвеланăç еннелле тăнă пехотин подразделенийĕсене çавăрса илнĕ. Соллумран хĕвеланăç енче тăшманăн 300 автомашинăран тата 30 танкран тăракан колоннине англичансен моторизованнăй отрячĕсем тытса чарнă.

Тытăкăна илсе тылалла ăсатнă итальянецсен хисепĕ пĕтĕмпе 3000 çын ытларах шутланать.

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи çар командованийĕ çапла пĕлтерет: декабрĕн 4-мĕшĕнче тăшман Тобрукран кăнтăр енче ларакан Эль Дига пункчĕ çине хаяр атакăсем тунă. Малтанхи икĕ атакăра тăшмана пысăк çухатусем кӳрсе пĕтĕмĕшпех каялла сирсе янă. Виççĕмĕш атакăра тăшман войскисем пăртак малалла кĕрсе кайнă, каярахпа англичансем, хирĕçле атака туса, тăшман çарĕсене каллех пысăк çухату кӳнĕ, çакна пула тăшманăн малтан йышăнса илнĕ вырăнăн пысăк пайĕнчен тухса кайма тивнĕ. Инди çарĕсен пехоти тăшмансен Бир—Эль—Гоби сывăхĕнчи позицийĕсене атакăланă. Илнĕ сведенисем тăрăх, çакăнти çапăçура итальянецсен 14 танкне тата нумай автомашинисене пĕтерсе тăкнă. Тăшман çарĕн çак района юлнă пĕчĕк ушкăнĕсем Англин çарĕсем хĕснипе çурçĕр-хĕвеланăç еннелле чакма тытăнаççĕ. Англи çарĕсен пĕр куçса çӳрекен колонни тăшманăн Бир—Эль—Гобирен çурçĕр еннелли районра тăракан вăйне атакăланă.

Америкăра çар хатĕрĕсем туса кăларас ĕç вăйлăн ӳсет

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Промышленниксен национальнăй ассоциацийĕн çулсеренех пулса иртекен съездĕнче вăрçă промышленность управленин руководителĕ Калумпен Американ пысăк промышленниксем умĕнче тухса каланă хăйĕн сăмахĕнче малашнехи çинчен çакна палăртнă: Американ Пĕрлешӳллĕ Штатсен мĕнпур вăрçă производстви 1942 çулта 26 миллиард доллара, 1943 çулта 46 миллиард доллара çитет. Клаумпен каланă тăрăх, Американ Пĕрлешӳллĕ Штатсенче кашни уйăхрах 2400 бомбардировщик, 2800 танк туса кăларма пуçласçĕ пулмалла. Унăн шухăшĕпе, станкостроительнăй промышленноçăн çитес çулта хĕçпăшал завочĕсене валли çеç 1.200 миллион доллархи продукци туса кăлармалла. Тĕрлĕ боеприпассем туса кăларасси январĕн 1-мĕшĕченех тивĕçлĕ хисепе ӳссе çитет. Клаумпен тата çакна кăтартса панă: çитес çулта Американ судостроительнăй промышленность кашни уйăхра туса кăларакан суднăсен тоннажĕ сахалтан та 400-шер пин тонна пулать.

Промышленниксен национальнăй ассоциацийĕн председателĕ хăй тухса каланă сăмахĕнче Американ 184 пин промышленникран, вăтамран илсен, 50 пин промышленник вăрçă ĕçĕнче кирлĕ продукцисем туса кăларма пултараççĕ, тенĕ.

Англи парламенчĕн ларăвĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 8-мĕшĕнче 15 сехетре Англи парламенчĕн икĕ палатин ларăвĕсем пуласçĕ. Парламентăн ятарласа пухнă çак ларăвĕсенче Черчилль тухса каласса кĕтеççĕ.

Норвеги профсоюзĕн руководителĕ Лондона пырса çитни

ЛОНДОН, декабрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Ослоран, гестапо сăнаса тăнă çĕртен, тухса тарнă Норвегин пĕрлешӳллĕ профсоюзĕн председателĕ Конрад Нордаль Лондона пырса çитнĕ. Нордаль Норвеги профсоюзĕсен Лондонри вăхăтлăх центральнăй органĕнче пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхпа промышленность пайĕсен — 0—88, сыруçемпе рабсилкоросен пайĕн — 2—30, дежурнă